24-мěш çул тухать. Хакě 15 пус.

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

1941
ИЮНЬ
14
ШАМАТКУН
138 (5853) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ.

Комсомол организацисене куллен ертсе пымалла

Çамрăксен ленинла-сталинла коммунистла союзě пирěн çěршывра пěтěм государство тата хуçалăх строительствинче большевикла партин активлă, шанчăклă помощникě пулса тăрать. ВКП(б) XVIII съезчě комсомол организацийěсене «предприятин, колхозăн, совхозăн, учреждении ěçěнчи çитменлěхсене пěтерес тата предприятине, колхоза, совхоза, учреждение ěçе лайăхлатма, социализмлă ăмăртупа ударничествăна организацилеме, массăллă кампанисем т. ыт. те ирттерме кирлě пек пулăшас задачăсемпе çыхăнса тăракан пур ыйтусене те сӳтсе-явас тата вăл ыйтусене тивěçлě организацисем умне лартас тěлěшпе анлă пуçарулăх кăтартма право» панă.

ВКП(б) XVIII съезчěн историллě решенийě комсомол организацисене çěнěлле ěçлеме хавхалантарчě, комсомолăн пурнăçěпе ěçне вăйлатма тата вěсен творчествăллă пуçарулăхне анлăн сарса пыма май пачě. Комсомол организацисем парти организацийěсем ертсе пынипе ВКП(б) XVIII съезчě тата XVIII конференци лартнă хуçалăхлă, çавнашкалах политикăллă задачăсене татса панă çěрте активлăн хутшăнса ěçлеме пуçларěç.

Улатăрти паровозсем юсакан заводри комсомол организацийě механически цехра тата завод территорийěнче тасалăхпа йěркелěх тунă. Комсомолецсем 20 тонна тимěр-тăмăр, 600 килограмм цветной металл пуçтарнă. Комсомолецсем производствăра пример кăтартса ěçлеççě. Стахановецсемпе ударниксен шучě хутшăнсах пырать. Март уйăхěнче комсомолецсем хушшинче стахановецсем 15 çын, ударниксем 19 çын пулнă пулсан, апрель уйăхěнче стахановецсем 22 çын, ударниксем 27 çын пулнă. Виçě комсомолец производствăран уйрăлмасăр мастер специальноçне илнě. Кунти комсомол организацийě завод экономикине çине тăрса вěренет.

Етěрне районěнчи «Пионер» колхозри комсомол пуçламěш организацийě хăйěн паха ěçěсемпе палăрса тăрать. Вăл çуракине хатěрленес тěлěшпе колхоз правленине тивěçлипе пулăшнă. Комсомолецсен вăйěпе тислěк усрамалли вырăн тунă. Уйра юр тытас тата удобренисем хатěрлес тěлěшпе пример кăтартнă. 17 комсомолецран 13 комсомолец производствăра ěçлет. Вěсем çураки вăхăтěнче нормăсене ирттерсе тултарса ěçлерěç.

Халě комсомол пуçламěш организацийě тырпулсене уйран пуçтарса кěме хатěрленет. Ялхуçалăх машинисене юсаççě. Комсомолецсем çěнě заем сарас ěçре те пример кăтартрěç. Кашни комсомолец çěршер тенкě заем çыранса, укçине те парса татнă.

Хуçалăх тата государство строительствинче комсомолецсем хăйсен пуçарулăхěпе активлăхне кăтартса примерлă ěçленине темěн чухлех илсе пама пулать. Комсомол çамрăксене воспитани парас ěçре те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак задачăна татса парас ěçре комсомол пирěн партие пысăк пулăшу парать.

Çак пулăшу парторганизацисем комсомол ěçěпе кулленех интересленсен, ăна куллен ертсе пулăшса пырсан татах пысăкрах пулма пултарать. Çакна манмалла мар, ВЛКСМ Центральный Комитечěн XI пленумě пулса иртнě хыççăн комсомола ертсе пырас ěçе çамрăксем хутшăнчěç. Паллах, вěсен ěç опычěсем сахалтарах-ха. Çавăнпа та комсомола пулăшасси, комсомол организацисен пуçарулăхне çийěнчех çěклентересси тата ěçре тӳрлетсе, çул кăтартса пырасси — пуçламěш парторганизацисен, ВКП(б) райкомěсемпе хула комитечěсен хисеплě задачи.

Парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвěсем çакна кăтартса пачěç: партин чылай организацийěсем комсомола ертсе пырас ěçе вăйсăрлатнă. Ку вăхăтчен комсомол çине çăмăллăн пăхнă. Комсомола ертсе пырас тěнине тěрěс мар ăнланнă. ВЛКСМ комитечěн е комсомол райкомěн ěçěсем çинчен пуçламěш парторганизацисенче е парти райкомěнче сӳтсе-яваççě, решенисем йышăнаççě. Ун хыççăн вара комсомол пирки йышăннă решенине пурнăçа мěнле кěртсе пынипе, решенисем йышăннă хыççăн комсомол пурнăçěнче мěнле улшăнусем пулнипе пачах интересленмеççě.

ВКП(б) Канаш райкомě 1940 çулти октябрь уйăхěнче комсомол райкомě çумěнчи яланлăх комиссисем мěнле ěçлени çинчен сӳтсе-явнă, тивěçлě решени йышăннă. Унтанпа вăхăт чылай иртрě, анчах парти райкомě хăйěн решенийě мěнле пурнăçланса пынине тěрěслемен. ВЛКСМ райкомě çумěнчи яланлăх комиссисем ку вăхăтченех начар ěçлеççě. Çавнашкалах 1941 çулти февраль уйăхěнче комсомол райкомěн хуçалăхě çинчен парти райкомěн бюровěнче сӳтсе-явнă. Бюрора палăртнă çитменлěхсем паянхи куна та çаплипех пулса пыраççě, комсомол хуçалăхне йěркелес тěлěшпе улшăнусем туни курăнмасть.

Канаш районěнчи «Красная звезда» колхозри пуçламěш парторганизаци комсомол организацин ěçěсем çинчен 1940 çулта тăватă хутчен, кăçал пěр хутчен сӳтсе-явнă. Апла пулсан та комсомол организацин ěçěсем лайăхланман. Комсомолецсем колхоз производствине сахал хутшăнаççě. Парторганизаци комсомол ěçěпе интересленмест, ěçре пулăшни çук. Решени йышăннипех лăпланса ларнă.

Комсомол организацисен ěçěсем çинчен парти оргăнěсенче отчетсем итлеме кирлě. Çакă вăл ертсе пырас ěçěн пěр формийě пулса тăрать. Анчах çакăнпа кăна лăпланса лармалла мар. Решени йышăннă хыççăн комсомол организацисене практикăллă пулăшу памалла, решенисене мěнле пурнăçласа пынине кулленех тěрěслесе тăмалла.

Хăшпěр райкомсем комсомол ěçěпе пачах интересленмеççě. ВКП(б) Красноармейски райкомě 1940 çулта комсомол ěçěсем çинчен пěрре те сӳтсе-явман. ВКП(б) райкомěн пропагандăпа агитаци отделěн заведующийě Петров юлташ комсомол райкомě çумěнчи пропагандăпа агитаци комиссин председательне те пěлмест. Пěр сăмахпа каласан, парти райкомě енчен комсомола кулленхи ěçре пулăшса пыни çук.

Калас пулать, комсомолăн хăшпěр райкомěсенче (Çěрпӳ, Красноармейски) пленумсене сайра-хутра кăна ирттереççě. Воспитани ěçне начар йěркеленě, яланлăх комиссисен председателěсемпе членěсем тăтăшах улшăнса тăраççě. Анчах парти райкомěсем çакăнпа килěшеççě пулас.

Комсомола ертсе пырас ěç çине çиелтен пăхнине пěтермелле. Парторганизацисем комсомол ěçěшěн, комсомолецсене воспитани парас ěç мěнле тăнишěн, вěренӳшěн ответлă пулса тăнине пěр минутлăха та манмалла мар.

Халě комсомол организацийěсем умěнче пысăк задачăсем тăраççě. Комсомолецсен хăйсен çар пěлӳлěхне, çар техникине тăрăшса вěренмелле. Çамрăксене пример кăтартса ěçлемелле.

Комсомол организацийěсен социализм строительствин пур участокěсенче те, уйрăмах партин пуçламěш организацийěсем çук çěрте, парти директивисене ěçре активлăн пурнăça кěртсе пыракансем пулмалла.

Çěнěрен суйланă партбюросен тата комитетсен, çавнашкалах парти райкомěсемпе хула комитечěсен отчетпа суйлав пухăвěсенче комсомола ертсе пырас тěлěшпе палăртнă çитменлěхсене хăвăртрах пěтермелле, комсомолецсене хуçалăх тата государство ěçне активлăн хутшăнтармалла.

ТАСС ПĚЛТЕРНИ

Англин ССР Союзěнчи посолě г. Криппс Лондона пыриччěнех, уйрăмах вăл пынă хыççăн, Англири тата ютçěршывсенчи пичетре «ССР Союзěпе Германи хушшинчи вăрçă çывăххи» çинчен сас-хура сарма пуçланă. Çав сас-хурасем тăрăх: 1) Германия СССР умне территориллě тата экономикăллă претензисем кăларса тăратнă тата халě вара Германипе СССР хушшинче татах та ытларах çывăхланмалли çěнě килěшӳ тăвасси çинчен каласусем пыраççě имěш; 2) СССР çав претензисене йышăнман имěш, çавна май Германия, СССР çине тапăнас тěллевпе, СССР чиккисем патне хăйěн войскисене илсе пыма пуçланă; 3) Совет Союзě, хăйěн черечěпе, Германипе вăрçма вăйлăн хатěрленме тытăннă имěш тата войскăсене Германи чиккисем патне илсе пырса тăратать.

Çавнашкал сас-хурасенче тěрěсси нимěн те çукки пуриншěн те паллă пулсан та, Мускаври ответлă çынсем çапах та, çав сас-хурасене çине тăрсах сарнине кура, ТАСС-а çапла пěлтерме полномочи пама кирлě тесе шутларěç: çав сас-хурасем вěсем—ССР Союзне тата Германине хирěç пыракан тăшманла вăйсем шухăшласа кăларнă вырнаçусăр пропаганда пулса тăраççě, çав тăшманла вăйсем вăрçăна малалла сарса тата вăйлатса пырассишěн интересленеççě.

ТАСС çапла пěлтерет: 1) СССР умне Германия нимěнле претензисем те кăларса тăратман тата халиччен хинчен те ытларах çывăхланмалли нимěнле çěнě килěшӳ тума та сěнмест, çакна пула вара кун пирки каласусем те пулма пултарайман; 2) СССР даннăйěсем тăрăх, Совет Союзěпе Германи хушшинче пěр-пěрин çине тапăнас марри çинчен тунă пакт условийěсене, Совет Союзě пекех, Германия та пěр пăркаланмасăр пăхăнса пырать, çавна кура, совет çыннисен шухăшěпе, Германия пакта пăсма тата СССР çине тапăнма шухăшлать текен хыпар пěртте тěрěс мар, юлашки вăхăтра Германин Балканри операцисенчен ирěкленнě войскисене Германин хěвелтухăçěнчи тата çурçěр-хěвелтухăçěнчи районěсене куçарни Совет Союзěпе Германи хушшинчи отношенисене тěкěнмен урăх сăлтавсемпе çыхăннă пулмалла; 3) СССР, хăйěн мирлě политикине пăхăнса, пěр-пěрин çине тапăнас марри çинчен Совет Союзěпе Германи хушшинче тунă пакт условийěсене пурнăça кěртсе пынă тата малалла та пурнăça кěртсе пыма шутлать, çавна кура вара СССР Германипе вăрçма хатěрленет текен хыпарсем суя тата провокациллě хыпарсем пулса тăраççě; 4) Хěрлě Çар запасěсен халăхи вăхăтра ирттерекен çуллахи сборěсем тата пулас маневрсем нимěнле урăх тěллевпе те мар, запасра тăракансене вěрентес тата чугунçул аппарачěн ěçне тěрěслес тěллевпе çеç пулса иртеççě, пурте пěлеççě, ăна кашни çулах ирттереççě, çавна май Хěрлě Çарăн çав мероприятийěсене Германине хирěç тăвакан тăшманла мероприятисем тесе кăтартни, сахалтан та, вырнаçусăр.

Плана срокчен тултарнă

РИГА, июнěн 12-мěш. (ТАСС). Ригăри велосипедсем тăвакан «Омега» завочěн коллективě Латвире совет влаçě туса хунăранпа çулталăк тултарнине тивěçлипе кěтсе илессишěн пыракан социализмлă ăмăртура 7 уйăх программине срокчен тултарма обязательство илнě. Çак обязательствăна чыслăн пурнăçа кěртнě. Завод 7 уйăх планне срокчен тултарнă. Рабочисен 50 процентě нормăсене пěрмаях ирттерсе тултараççě.

Ригăри «Метеор» ятлă резина фабрики тата «Текстилиана» фабрики çурçул заданине срокчен тултарнă.

* * *

СВЕРДЛОВСК, июнěн 12-мěш. (ТАСС). Верх-Висетски заводăн коллективě продукци туса кăлармалли çурçул планне тултарнă. Çулталăк пуçланнă хыççăн планран ирттерсе 3.336 пин тенкěлěх накоплени пухнă.

* * *

ЛЕНИНГРАД, июнěн 12-мěш. (ТАСС). «Большевичка» ятлă çěвě фабрики пěрремěш çурçул планне тултарнă. Çак уйăх вěçлениччен планран ирттерсе 2 миллион тенкěлěх издели туса кăлараççě.

Ломоносов ячěпе тăракан фарфор завочě çурçул программине срокчен тултарнă.

* * *

ВИИПУРИ, июнěн 12-мěш. (ТАСС). Виипурири кондитерски комбинат 6 уйăх заданине тултарнă. Пěтěм продукци — пěрремěш сортлă. Продукцин хăйне тума ларакан хакне 5,5 процент чакарнă. Çěнě сортлă конфетсемпе печенисем туса кăларма пуçланă.

* * *

ЛЬВОВ, июнěн 12-мěш. (ТАСС). Енер Львоври апт-какай тресчěн завочěсем çурçул планне тултарнă.

* * *

ХАРЬКОВ, июнěн 12-мěш. (ТАСС). Тиняков ячěпе тăракан çěвě фабрики çурçул планне тултарнă, 19,8 миллион тенкěлěх издели туса кăларнă.

* * *

ДНЕПРОПЕТРОВСК, июнěн 11-мěш. (ТАСС). Дзержинский ячěпе тăракан металлурги завочěн новопрокатнăй цехě тата улттăмěшпе саккăрмěш номерлě домна кăмакисем паян ултă уйăх планне тултарнă. Бессемеровски, листопрокатнă, среднесортнăй, бандажнăй цехсем заданине татах та маларах тултарнă.

* * *

ЗНАМЕНКО, июнěн 12-мěш. (ТАСС). Чугунçул работникěсен Пěтěм Союзри кунне тивěçлипе кěтсе илессишěн социализмлă ăмăрту сарса ярса, Одесса чугунçулěн Знаменкори отделенийěн работникěсем çурçул планне срокчен тултарнă. Чугунçул работникěсем 6 уйăхри заданирен ирттерсе 4.000 вагон тиеме сăмах панă.

Выигрышсене тӳлеме пуçланă

ПЕТРОЗАВОДСК, июнěн 12-мěш. (ТАСС). Виççěмěш Пятилетка (виççěмěш çулхи кăларăм) Заемěн пěрремěш тиражě тăрăх выигрышсене тӳлеме пуçланă. Пěрремěш кун хушшинче Петрозаводскра 71.430 пин тенкěлěх 628 выигрыш тӳленě.

Советлă Эстония çурхи культурăсене акса пěтернě

ТАЛЛИН, июнěн 11-мěш. (ТАСС). Эстони СС Республики çурхи культурăсене акса пěтернě. Июнěн 10-мěш тěлне республикăра çураки планне 102,2 процент тултарнă, пурě 663.274 гектар акнă. МТС-сем тата машинăллă-лашаллă прокат пункчěсем çěртме тума тата çерем çěтме тытăнаççě. Республикăра пурě 27 пин гектар çерем çěтме палăртнă.

МТС-сенче трактор мастерскойěсен строительстви сарăлса пырать. Мěнпур инвентаре тата утă çулмалли машинăсене йěркелесе хатěрлеççě.

Хресченсем уйхире тислěк кăларма тытăнаççě.

Советлă Выборгри призывниксем

Хěрлě Çарпа Тинěс-Çар Флочěн черетлě призывě тěлне советлă Выборг çырăва лайăх пěлекен, çирěп сывлăхлă çамрăксем хатěрлет. Хěллехи вăхăтра призывниксем йěлтěрçěсен отрячěсенче вěреннě. Çамрăксем производствăра ěçленě хушăрах ГТО комплексěн нормисене пěтěмěшпе пекех панă. Пулас боецсем Хěрлě Çарăн вооруженине, унăн уставěсене вěренеççě.

500 ытла çамрăк тинěс-çар клубěсенче вěренеççě.

Уфари физкультурниксен шлюпкăллă похочěсем

Башкирири ěççыннисем Тинěс-Çар Флочěн кунне кěтсе илме активлăн хатěрленеççě. Уфара Осоавиахимăн тинěс-çар клубě уçăлнă. Хулари предприятисемпе учебнăй заведенисенче тинěс-çар ěçне вěренмелли клубсем ěçлеççě, çав клубсенче 476 çын вěренет.

Ялта заем укçине пухассине хăвăртлатар!

Кашни ěççыннине çěнě заема çыранса илме пулăшмалла

Виççěмěш Пятилетка (тăваттăмěш çулхи кăларăм) Заемне сарасси ăнăçлăн пулса пырать пулин те, ку ěçре çитменлěхсем те сахал мар-ха. Хăшпěр çěрте командировкăна, е отпуска кайнă çынсене заем çыранас ěçе явăçтарман.

Сăмахран, Шупашкарти кинофикацин межрайуправленийěнче виçě çын командировкăра пурăнаççě, анчах вěсене заем çыранса илме пулăшас тěлěшпе кунти комсод çак тарана çитсе нимěн те туман. Çавăн пекех Наркомздравăн курссем ирттерес тěлěшпе ěçлекен отделта командировкăна кайнă 5 çынна заем çыранса илес ěçе явăçтарман.

Ишлей районěнчи чылай комсодсем отпускра пурăнакан учительсене çěнě заема çырăнтарса илтересси пирки нимěн те тумаççě. Унсăр пуçне пěр вăхăтрах икě çěрте ěçлекенсем пěр вырăнта кăна заем çыранса илеççě. Ун пек учительсем районра 22 çын. Октябрьски районра отпуска кайнă учительсене, пěтěмпе 20 çынна, заем çыранса илес ěçе явăçтарман.

Çакăн пек çитменлěхсем республикăри кашни районрах пур. Комсодсем отпуска кайнă, е вăхăтлăх командировкăра пурăнакан çынсене пурне те шута илсе тухса, вěсемпе çыхăну тытас пулать, вěсене çěнě заема çыранса илме пулăшмалла. Финанс оргăнěсен районри мěн пур коллективсенче подпискăна пурне те явăçтарнипе явăçтарманнине тěрěслесе тухмалла, комсодсене ěçре лайăх пулăшса пымалла.

Ф. МИРОНОВ.

Ěççыннисен политикăллă-моралле пěрлěхěн вăйě

ИЕПРЕÇ. Виççěмěш Пятилетка (тăваттăмěш çулхи кăларăм) Заемне районри ěççыннисем пысăк хаваслăхпа çыранаççě.

Заем сарас ěç иртнě çултинчен темиçе хут лайăхрах пулса пырать. Ăна çак фактсем те лайăх çирěплетсе параççě. 1940 çулта подписка пуçланнă пирвайхи икě кун хушшинче рабочисемпе служащисем 277 пин тенкěлěх çыраннă пулсан, кăçал çав вăхăт хушшинче 366 пин тенкěлěх çыраннă. Пěлтěр колхозниксем 36 пин тенкěлěх çыраннă пулсан, кăçал вара 117 пин тенкěлěх çыранчěç. Иртнě çулти заема районěпе 606.500 тенкěлěх сарнă, кăçал 6—7 кун хушшинче 809 пин тенкěлěх, урăхла каласан, район бюджечěпе пăхнинчен 92.000 тенкě ытларах сарăлнă.

Çěнě заема «Кооплеспром» промартелěнчи, Буинскри хăма çуракан заводри тата лесхозра ěçлекен рабочисем пěр уйăхри ěçукçи чухлě çыранчěç. Буинскри хăма çуракан заводра ěçлекенсенчен 78 çын уйăхри ěçукçинчен ытларах çыраннă.

Колхозниксемпе колхозницăсем те заема иртнě çулхинчен чылай нумайтарах çыранчěç. «Заря» колхоз членěсем иртнě çулта 1840 тенкěлěх çыраннă пулсан, кăçал 5.100 тенкěлěх çыраннă, 1480 тенкě пирвайхи взнос тӳленě.

Чăваш Тимешěнчи «Большевик» колхоз членěсем пурте тенě пекех 100—150-шар тенкěлěх çыранчěç.

Йěпреç поселокěнчи килхуçи хěрарăмěсем çěнě заема пысăк хаваслăхпа çыраннине палăртса хăвармалла. Килхуçи хěрарăмěсенчен А. Лаврова 100 тенкěлěх çыранса, укçине 50 тенкě тӳлерě. Килхуçи хěрарăмěсем хушшинче Е. Журавлева, М. Ахматовская, В. Лешева, Е. Леоховцева тăрăшса ěçлерěç. В. Журавлева юлташ икě кун хушшинче 830 тенкěлěх, М. Ахматовская 1500 тенкěлěх сарнă. Килхуçи хěрарăмěсем çěнě зама 5000 тенкěлěх çыранса илнě.

Районěпе илсен июнěн 11-мěш тěлне заем укçине 31 пин тенкě пухнă. Хăшпěр ялсоветсемпе колхозсенче ку ěçе тивěçлипе организацилемен.

Паянхи куна районри 50 колхозран 10 колхозра подписка укçине пěр пус та пухман. Ку шута çак колхозсем кěреççě: «Çěнě пурнăç», Ворошилов ячěпе тăракан, «11 лет Чувашии», «Орел», «Канаш», «Красный партизан», «Коммунар» т. ыт.

Заема ăнăçлăн сарса çитернипе лăпланса лармалла мар, ку ěçěн пуçламěшě кăна. Заем кампанине ăнăçлăн вěçлессине укçине вăхăтра пухса çитерни татса парать. Заем сарас ěçри паха опытсене малалла та сарса пымалла.

Д. МИХАЙЛОВ.

Элěк районěнче начар ěçлеççě

ЭЛĚК, июнěн 13-мěш. (**Телефон тăрăх, хамăр корр.**). Районра рабочисем, служащисем тата ялти ěççыннисем хушшинче çěнě заема 545 пин тенкěлěх, иртнě çулхинчен 80 пин тенкě нумайрах сарнă, е бюджетра пăхнинчен 22 пин тенкě ирттернě.

Анчах, калас пулать, заем сарас тěлěшпе çителěксěр ěçлекен ялсоветсем те пур-ха. Хирлепуç ялсовечě бюджет тăрăх 9 пин тенкěлěх сарма пăхнă пулсан, 1.900 тенкě кăна сарнă. Çавăн пекех Татмăш, Чăваш Сорăм т. ыт. ялсовечěсенче ěçлеме пултаракан колхозниксем хушшинче те çěнě заема сарассишěн кěрешмеççě. Татмăш ялсоветěнче вăйпитти 45 çынна, Чăваш Сорăм ялсоветěнче 35 çынна подпискăна явăçтарман-ха.

Çěнě заема единоличниксем хушшинче мěнле сарнине перекет кассинче уйрăмăн учета илмеççě. Çакна пула единоличниксем хушшинче мěнле ěçлени курăнмасть. Тӳррипех калас пулсан, ку ěçе вěсем хушшинче çителěксěр туса пыраççě.

Районра çапла калаççě:

— Заема бюджетра пăхнă чухлě сарнă, халě ěнтě хыпăнса ӳкмеллиех çук.

Çакна пула чылай çěрте çěнě заем тавра массăллă-ăнлантарулă ěçе тума чарăннăпа пěрех.

Заем укçине пухасси те чакнă. Юлашки 5 кун хушшинче районра 5 пин тенкěрен те каярах пухнă. Пěтěмпе районра 40 пин тенкě çеç пухнă.

И. МОСЕЕВ.

Лапсар ялсовечě малта пырать

КУКЕÇ, июнěн 13-мěш. (**Телефон тăрăх**). Паянхи куна Виççěмěш Пятилетка (тăваттăмěш çулхи кăларăм) Заемне районěпе 699.495 тенкěлěх сарнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем 423 пин тенкěлěх ытла, колхозниксемпе единоличник-хресченсем 276.445 тенкěлěх çыраннă.

Подписка укçине пухас тěлěшпе Лапсар ялсовечě малта пырать. Кунта çěнě заема 10.110 тенкěлěх сарса, укçине 8.265 тенкě пухнă.

Г. ГРИГОРЬЕВ.

Районри перекет касси бухгалтерě.

Учительсем хастарлăн ěçлеççě

ШАХАСАН. Ухманти тулллимар вăтам шкулти учительсем Виççěмěш Пятилетка (тăваттăмěш çулхи кăларăм) Заемне сарас тěлěшпе хастарлăн ěçлеççě. Шкул коллективě çěнě заема пěр уйăх ěç укçи фондěнчен чылай ирттерсе çыраннă.

Колхозра 9 бригада. Çак бригадăсенче заем сарас тěлěшпе ěçлекен уполномоченнăйсене учительсем аван пулăшса пыраççě. «Правда» колхоз членěсем çěнě заема 10.000 тенкěлěх çыранса илчěç. Колхоз председателě П. Михайлов юлташ заема 500 тенкěлěх, бригадирсем 100-шер тенкěлěх е ытларах çыранса илчěç.

Хальхи вăхăтра подписка укçине пухас ěç ăнăçлăн пулса пырать.

А. ЕФИМОВ.

Пысăк ăнăçлăхпа сарчěç

ВĂРНАР. Молотов тата Ворошилов ячěпе тăракан колхозсен членěсем çěнě заема кăларасси çинчен постановлени йышăннă кунах заема 10.285 тенкěлěх çыранса илсе, подписка укçине 5500 тенкě пухнă.

Заем сарас тěлěшпе А. Герасимов, П. Юлмасов, М. Ильина, М. Лукина, Е. Гончарова т. ыт. юлташсем активлăн ěçлерěç.

Я. БУРМИСТРОВ.

Облигацисене валеçсе панă

СĚНТĚР, июнěн 13-мěш. (**Телефон тăрăх**). Ěççыннисем хушшинче çěнě заема сарас ěç кашни кунах вăйланса пырать. Паянхи куна 579 пин тенкěлěх сарнă, вăл шутран колхозниксемпе единоличник-хресченсем, пěтěмпе 7516 çын (вăл 92 процент пулать), 307.925 тенкěлěх заем çыранса илчěç, подписка укçине 36.080 тенкě пухнă. Рабочисемпе служащисен пěтěм хисепěнчен 93,6 процентчě заем çыранса илес ěçе хутшăннă.

Подписка укçине Пашалукасси ялсовечě пěтěмпех пухса пěтерчě, заем çыранса илнě ěççыннисене çěнě заемăн облигацийěсене алла панă.

А. ПЕРЛОВ.

Районри перекет касси бухгалтерě.

ÇУРАКИ

Республикăсен ăмăртăвě
(Июнěн 10-мěш тěлне, процентпа)

Республикăсем	Çуртри акнă	Тěштырăсемпе пăрçа йышши культурăсем акнă
Мордва АССР	88,5	101
Мари АССР	90,4	97,6
Чăваш АССР	97,7	102,1

МОРДВА АССР

САРАНСК, июнěн 12-мěш. (**Телеграфпа**). Июнěн 10-мěш тěлне Мордва АСС Республикинчи колхозсем ака планне пěтěмпе 88,5 процент, пăрçа йышши тěштырă культурисене акассине 101 процент тултарнă. Хальхи вăхăтра республикăра пахча-çимěç культурисен калчисене лартаççě, çěртме тăваççě, тырпулсене пухса кěртме хатěрленеççě.

К. ШЕВЕЛЕВ.
«Красная Мордовия» хаçат редакторě.

МАРИ АССР

ЙОШКАР-ОЛА, июнěн 13-мěш. (**Телефон тăрăх**). Июнěн 10-мěш тěлне Мари АСС Республикинчи колхозсем çуртри акас плана 90,4 процент тултарнă, тěштырăпа пăрçа йышши культурăсене акас плана 37,6 процент, йěтěн — 89,4 процент, кантăр — 50,4 процент.

Колхозсенче пахча-çимěçсем лартас, çěртме сухи тăвас ěçсем сарăлса пыраççě. Çěрулми лартас плана 62 процент, çěртме сухи планне 19,5 процент тултарнă.

БОЛЕВЩИКОВ.

«Марийская Правда» хаçат редакцийě.

Чăваш АССР МТ Станцийěсем июнěн 10-мěш тěлне хăйсен ěç планне мěн чухлě тултарнине кăтартакан сводка
(Процентпа)

МТ Станцисем	Çулталăк планне тултарнă	Вăл шутран çурхи ěçсен планне тултарнă
Улатăр	23,8	76,4
Элěк	20,3	71,4
Вăрнар	25,9	90,0
Йěпреç	32,8	102,1
Ишлей	31,6	92,2
Канаш	25,1	93,0
Куславкка	17,6	57,2
Комсомольски	32,2	76,6
Красноармейски	23,1	56,4
Хěрлě Чутай	17,9	57,3
Кувакино	26,2	92,1
Сěнтěрвăрри	18,8	104,5
Первомайски	30,1	74,1
Пăрачкав	21,5	64,8
Сěнтěр	28,4	83,1
Вăрмар	22,9	91,6
Çěрпӳ	19,5	63,4
Шупашкар	20,7	69,3
Чкаловски	40,7	120,2
Шăмăршă	15,0	53,3
Шăхасан	27,6	94,8
Çěмěрле	15,8	61,4
Етěрне	19,5	52,3
Елчěк	27,5	92,1
Тăвай	28,7	104,8
Республикипе	24,9	80,1

Колхозсенче июнěн 10-мěшне ирхи çěртме мěн чухлě сухаланине кăтартакан сводка

Районсем	Плана тултарнă (Процентпа)
Улатăр	28,2
Элěк	60,1
Вăрнар	31,5
Йěпреç	50,7
Ишлей	47,6
Калинински	57,5
Канаш	38,3
Куславкка	10,5
Комсомольски	55,4
Красноармейски	32,0
Хěрлě Чутай	29,2
Кувакино	35,4
Сěнтěрвăрри	21,0
Октябрьски	22,7
Первомайски	51,1
Пăрачкав	22,4
Советски	26,0
Сěнтěр	33,9
Вăрмар	16,5
Çěрпӳ	62,7
Шупашкар	20,5
Чкаловски	55,1
Шăмăршă	26,4
Шăхасан	45,4
Çěмěрле	19,0
Етěрне	25,0
Елчěк	38,1
Тăвай	34,6
Республикипе	36,9

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Агитаци ĕçне куллен туса пымалла

ÇĔРПУ. 1941 çулти çуракине хатĕрленсе иртгернĕ чухне партипе комсомолăн пуçламĕш организацисем тата агитколлективсем халăх хушшинче политикăллă агитаци ĕçне нумай вăйлатрĕç. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсем тата колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени çинчен тĕплĕн ăнлантарса парас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕç. Çак ĕçе агитаторсем 500 çын ытла хутшăннă.

Партипе правительство решенийĕсем çинчен халăха тĕплĕн ăнлантарса парасси агитаторсене тата агитколлектив руководителĕсене хăйсене вĕрентнинчен, ĕçре пулăшнинчен нумай килет. Çакна шута илсе, ВКП(б) райкомĕ пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсен, кандидат групписен парторгĕсен канашлуне, районти 9 участокра агитаторсен семинарне туса иртгернĕ. Çак канашлупа семинарсенче партипе правительство йышăннă постановленисем çинчен колхозниксене мĕнле ăнлантарса парасси, политикăллă агитаци ĕçне мĕнле туса пырасси çинчен агитаторсене тĕплĕн каласа панă.

Кăçал агитколлективсем хăйсен ĕçне колхозри бригадăсемпе звеносенче туса пычĕç. Вĕсем партипе правительство решенийĕсем тата тĕнчери ларутăру ыйтăвĕсем çинчен туса иртгерекен докладсемпе калаçусене колхоз, бригада тата звено умĕнче тăракан конкретлă задачăсемпе çыхăнтарса пычĕç. Тÿрех калас пулать, кăçалхи çуракине хатĕрленсе иртгернĕ вăхăтра агитколлективсене ялти шкулсенчи учительсем тата аслă классенче вĕренекенсем нумай пулăшрĕç. Кăçал пирĕн районра стена хаçачĕсем те йĕркеллĕ тухса тăчĕç, ака вăхăтĕнче 76 колхозра радиоприемник ĕçлерĕ.

Çуракине хатĕрленсе иртгернĕ вăхăтра политикăллă агитаци ĕçне мĕнле туса пынине пăхса тухсан, вăл колхозсен ĕçне лайăхлатма нумай пулăшни уççăнах курăнать. Халĕ районри нумай колхозсем, колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленине пурнăça кĕртсе пырса, ялхуçалăхĕн çуркуннехи ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕç. Сăмахран акă, Тутарла Кăнаш ялсоветĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра кăçал политикăллă агитаци ĕçне иртнĕ çулхинчен нумай лайăх организациленĕ. Партипе правительство йышăннă постановленисем çинчен кунта колхозниксене вăхăтра ăнлантарса панă. Бригадăра стена хаçачĕсем яланах йĕркеллĕ тухса тăраççĕ. Агитаци ĕçне колхоз производствинчи ĕçсене лайăхлатассипе тачă çыхăнтарса туса пыраççĕ. Стена хаçачĕсенче бригадăсем, звеносем тата уйрăм колхозниксем мĕнле ĕçленине тăтăшах çутатса пыраççĕ. Колхоз председателĕ Васильев юлташ колхозри пĕтĕм ĕçе массăллă агитаци ĕçне вăйлатни тăрăх туса пыма тăрăшать. Çакăн пекех Анатри Кипекçе, Пĕкĕрвар, Первомайск ялсовечĕсене кĕрекен колхозсенче те агитаторсем кăçал лайăх ĕçлесе пычĕç. Кăçал кунти колхозсенче ĕç нормине тултарса ĕçлемен колхозниксем питĕ сахал. Ку вăл политикăллă агитаци ĕçне ĕç дисциплинине çирĕплетессипе çыхăнтарса пынинчен килнĕ.

«Глиссер» колхоза кунти комсомол организаци пысăк пулăшу пачĕ. Комсомолецсем агитаци ĕçне туса пынипе пĕрлех хăйсем те уйхир ĕçĕнче стахановла ĕçлесе, ытти колхозниксене пример кăтартрĕç. Федоров комсомолец норма тăрăх 7 гектар акас вырăнне, кашни кун 11 гектар акнă. Çавăнпа та колхозниксем Федоров агитаторăн калаçуне питĕ тимлĕн итлеççĕ, мĕншĕн тесен вăл агитаци ĕçне колхозри ĕçсемпе тачă çыхăнтарса пырать. Ку организацире çакăн пек комсомолецсем татах пур.

Ака вăхăтĕнче кинопа туллин усă куртăмăр. Çураки вăхăтĕнче 71 колхозра кинокартинăсем кăтартнă. Çавăн пекех колхоз театрĕн тата чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн постановкисем колхозниксене питĕ кăмăла карĕç.

Халĕ ĕнтĕ çураки ĕçĕсем вĕçленчĕç. Анчах та çуракине хатĕрленсе иртгернĕ чухне туса пынă политикăллă агитаци ĕçне пĕрре те вăйсăрлатма юрамасть, ăна тата ытларах вăйлатмалла. 1941 çулта вăйлă тырпулшăн кĕрешессине вăйлатса пыма колхозниксене мобилизацилесе пырасси политикăллă агитаци ĕçĕнче тĕп вырăнта пулмалла.

М. СКВОРЦОВ.

ВКП(б) Çĕрпÿ райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

Наркомздраври парторганизацине тивĕçлĕ пулăшу кирлĕ

Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатĕнчи пуçламĕш парторганизаци умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Парторганизацин Наркоматри çитменлĕхсене çийĕнчех Наркомат руководителĕсем умне лартмалла, аппаратри бюрократизмпа волокитăна хирĕç кĕрешмелле, работниксене ĕçре пулăшмалла, вĕрентмелле, ĕç дисциплинине çирĕплетмелле.

Анчах Наркомздраври пуçламĕш парторганизаци çак задачăсене йĕркеллĕн пурнăçа кĕртсе пыраймасть.

Çав вăхăтрах Наркомздрав ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Ĕçсыннисен жалобисене нумай вăхăт хушши пăхса тухмасăр, вĕсем тăрăх тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасăр выртаççĕ, хăшпĕр чухне жалобăсене çухатаççĕ.

Кăçалхи январь уйăхĕнчен пуçласа май уйăхне çитиччен Наркомздрава 50 жалоба пырса кĕнĕ. Вĕсенчен 22 процентне кăна вăхăтра татса панă. Хăшпĕр жалобăсем икшер уйăх ытларах нимĕнле хускалмасăр выртаççĕ.

1940 çулти декабрĕн 17-мĕшĕнче Елчĕкри больницăра ĕçлекен К. врач йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайни çинчен жалоба килнĕ. Çак жалоба Наркомздравра 20 кун хушши выртнă. Кун хыççăн жалобăна тĕрĕслеме парти членĕн кандидатне Еремеев юлташа панă. Вăл вара, çав жалобăна хăй аллинче 20 кун хушши тытнă хыççăн, ăна каллех райздрава ярса панă. Çапла вара, çак жалобăна 50 кун хушши тĕрĕсленĕ.

Февраль уйăхĕнче Шупашкарти акушерски шкул заведующийĕ Филиппов ĕçкĕне пула шкул ĕçне япăхтарни çинчен жалоба панă. Анчах Филиппов пирки ку вăхăтченех нимĕнле мера та йышăнман. Вăл çаплах ĕçсе ÿсĕрĕлсе çÿрет, шкул ĕçне япăхтарать.

Кăçалхи май уйăхĕнче Наркомздрав бригадисем Шăмăршă, Сĕнтĕр районĕсенче пулнă. Вĕсем районсенче чирсемпе кĕрешес ĕç мĕнле пынине тĕрĕсленĕ. Бригадăсем районсенче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртнă. Анчах Наркомздрав руководителĕсем çав çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерес тесе мерăсем йышăнма васкамаççĕ.

Наркомздрав аппаратĕнче ĕçлекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе йĕркеллĕн туса пымаççĕ. Воспитани ĕçĕ çителĕксĕр пулнă пирки ĕç дисциплини те япăх. Сăмахран, Яковлева апрелĕн 22-мĕшĕнче 20 минута, апрелĕн 26-мĕшĕнче 1 сехет те 55 минута хушши ĕçе кая юлса тухнă. Анчах, Яковлевăна ответ тыттарман.

Кăнтăрлахи вăхăтсенче хăшпĕр работниксем 7—10 минута хушши кая юлаççĕ, ĕç кунĕпе туллин усă курмаççĕ. Кун пирки нарком январĕн 24-мĕшĕнче приказ кăларнă, анчах приказ пурнăçа кĕрсе пыни çук-ха.

Çак примерсем вĕсем Наркомздраври пуçламĕш парторганизаци профсоюзпа комсомола, çавнашкалах обществăллă организацисене ертсе пыманнине кăтартса параççĕ.

Парторганизацин пухăвĕсенче критикăпа самокритика çителĕксĕр. Пухусенче çитменлĕхсене кăтартса парсан, пĕрне-пĕри хупласа лартаççĕ. Хăшпĕр работниксем критикăна хĕсме пăхаççĕ. Çавна пула вара пухусенче коммунистсем пĕр-пĕрин çитменлĕхĕсене кăтартса пама шикленеççĕ.

Наркомздраври пуçламĕш парторганизацин ĕçĕсемпе парти Шупашкар хула комитечĕ сахал интересленет. Иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче парторганизацин ĕçĕсем çинчен доклад итленĕ, пысăк çитменлĕхсем палăртнă. Решени йышăннă та маннă, хула комитечĕ хăйĕн решенине пуçламĕш парторганизаци пурнăçа мĕнле кĕртнине тĕрĕслемен. Иртнĕ çулхи çитменлĕхсем кăçал та çаплипех пулса пыраççĕ.

Наркомздраври пуçламĕш парторганизацин хăйĕн ĕçне XVIII партконференцин решенийĕсем тăрăх çĕнетсе урăхлатмалла. ВКП(б) хула комитечĕн парторганизацине тивĕçлипе пулăшса пымалла.

А. МОЛОСТВОВ.

Çамрăк коммунистсем хушшинче ĕçлемен çĕрте

ШАМАРША. ВКП(б) райкомĕ парти членĕн кандидачĕсене политикăллă воспитани парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Районра кандидат стажĕ иртсе кайнă коммунистсем 48 çын шутланаççĕ. «Красный партизан» колхозри пуçламĕш парторганизацинче пур кандидатсен те кандидатра тăмалли стажсем иртнĕ. Çак организацисенче çамрăк коммунистсем хушшинче ĕçлессине кирлĕ пек организацилемен.

Парти райкомĕн оргинструкторĕсем тата пропагандăпа агитаци отделĕсем çамрăк коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Парти членĕн кандидачĕсем Самаянин, Ефимов, Поспелов, Смаев, Якушева, Лабутин, Николаев тата ытти юлташсем те парти историне вĕренме пуçăнманпа пĕрех, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» учебникăн пĕрремĕш сыпăкне кăна вĕренеççĕ.

Пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем парти членĕн кандидачĕсене обществăллă ĕçе çителĕклĕ явăçтармаççĕ, вĕсем производствăра мĕнле ĕçленипе сахал интересленеççĕ, вĕсене ĕçре çителĕксĕр пулăшаççĕ.

А. АНДРЕЕВ.

Комсомол организацисен пуçарăвĕ

ШАХАСАН. Районри хăшпĕр комсомол организацийĕсем колхозлă ялсене культурăллă тăвас тĕлĕшпе лайăх ĕçсем пуçарнă. «Кив Шордан» колхозри комсомолецсем урамсене йывăçсем лартнă, палисадниксем тунă, урамсене çÿп-çапсенчен тасатнă, килвырăнĕсенче çырла йывăççисем лартассине организациленĕ. Киров ячĕпе тăракан колхозри кашни комсомолец 15 йывăç лартнă. Колхоз клубĕ умĕнче сад тунă. Тăрăнри комсомолецсем вăрманта канупа культура паркĕ тунă.

Анчах та ВЛКСМ райкомĕ комсомол организацисем пуçарнă лайăх ĕçе ертсе пымасть, ăна пур организацисене те сарма тăрăшмасть.

В. АНДРЕЕВ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Румынири паллă революционерка Анна Паукер юлташ, халĕ вăл Мускаврă пурăнать.

ТАСС фото-ÿкерчĕкĕ.

Çурçул программине тултарнă

Ылттăнпа платина промышленноçĕн малта пыракан предприятийĕсем çурçул программине тултарса пыраççĕ. «Амурзолото», «Джугджурзолото», «Ларасунзолото» тресчĕсем, Ленински, Крапоткински приисксем («Лензолото» тресчĕ), Тыркандински, Лебедински приисксем («Якутзолото» тресчĕ), Лимурийски, Херпучински приисксем («Приморзолото»), Балахчински приисск («Хакассзолото» тресчĕ) тата ыттисем те пĕрремĕш çурçулта ылттăн кăлармалли плана срокчен тултарнă.

* * *

ГРОЗНЫЙ, июнĕн 11-мĕш. (ТАСС). Паян «Старогрознефть» тресчĕ нефть тата газ кăлармалли çурçул планне тултарнă. Продукцин хăйне ларакан хакĕ чылай чакнă.

* * *

КИШИНЕВ, июнĕн 11-мĕш. (ТАСС). Апат-çимĕç промышленноçĕн чылай предприятийĕсем çурçул планне тултарнă. Вĕсем хушшинче — «Майăн 1-мĕш», Ткаченко ячĕпе тăракан консервăй заводсем, шампански эрехсен комбиначĕ тата ыттисем.

Çеçпĕл Мишши масарĕ çинче

Чернигов облаçĕнчи (Украина) Остер хули çывăхĕнче пĕр илемлĕ вырăнта чăвашсен аслă поэчĕн Çеçпĕл Мишшин вил тăприйĕ выртать. Чăваш Совет Писателĕсен правленийĕ хушнă тăрăх, нумай пулмасть, Остер хулине чăвашсен поэчĕ Василий Усли килсе кайрĕ. Вăл Çеçпĕл Мишши çинчен калакан материалсене, кунти колхозниксен аса илĕвĕсене пухрĕ тата поэт масарĕ çинче пулчĕ.

Кунти колхозниксем тăванлă халăх поэтне — Çеçпĕл Мишшине çав тери ырă кăмăлпа чысласа пурăнни уççăнах курăнчĕ.

Поэт выртакан тăпра йĕритавра хитрелетсе карта тытса çавăрнă, чечексемпе илемлетнĕ. Пионерсем ăна тирпейлĕ пăхса усрас тĕлĕшпе хăйсем хушшинче дежурство организациленĕ.

«Коминтерн» колхозăн культура çуртĕнче Çеçпĕле асăнса литература вечерĕ пулса иртрĕ. Поэтăн творчествипе пурнăçĕ çинчен Василий Усли тĕплĕн каласа пачĕ, унăн хăшпĕр сăввисене вуларĕ.

Украина писателĕ Михаил Хазан Çеçпĕл Мишшин юлашки çулсенчи пурнăçĕпе вăл Украинăри Ф. Покрышня ятлă пĕр чухăн хресченпе çав тери çывăх туслă пурăнни çинчен каласа кăтартрĕ.

Юлашкинчен В. Усли Çеçпĕл Мишши поэтăн колхозниксем упраса усранă архивне Шупашкарти чăваш литературин музейне пама илчĕ.

Драматург **В. БОГАТЫРЕВ.**

Чернигов хули.

Тырпулсене сиенлекен хурткăпшанкăсенчен сыхланма хатĕр тăрар

Партипе правительство колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановлени колхозниксем хушшинче çĕнĕ çĕкленÿ пуçарса ячĕ. Çураки ĕçĕсем, ытти çулхисемпе танлаштарсан, çанталăк условийĕсем чăрмантарнă пулин те, пысăк агротехникăллă мелсемпе пулса иртрĕç. Пысăк тухăçлă тырпул туса илме пур енчен те шанчăк пур.

Анчах çанталăк условийĕсем çине шаннипех пысăк тухăçлă тырпул туса илме ĕмĕтленни йăнăш пулнă пулĕччĕ. Тырпулран пысăк тухăç илес пулсан, ăна малтан калчаран пуçласах лайăх пăхса ÿстерес пулать. Калчасене çумкурăксенчен тасатса, сиен кÿрекен хурткăпшанкăсенчен сыхласа усраса, вăхăтра тата тăккаламасăр пуçтарса кĕртмелле.

Тырпулсене сиен кÿрекен хурткăпшанкăсем тата тĕрлĕрен чирсем пирĕн республикăри колхозсенчи тырпул тухăçне кашни çулах сахал мар чакараççĕ. Кунта вуншар чирĕ çинчен асăнсан та çителĕклĕ. Хăшпĕр районсенче ку чирпе тырпулсем вуншар процент таран чирлени пулнă (Ишлей, Çĕрпÿ, Красноармейски), уйрăм районсенче ку процент ытларах та пулнă.

Пахча-çимĕç культурисене акмалли çĕр лаптăкĕ колхозсенче çултан çулах ÿссе пырать. Çавнашкалах пахча-çимĕçсен пĕтĕм продукцийĕ те çултан çулах нумайланать.

Ана-йăран çине лартса (акса) тăвакан пахча-çимĕçсен тухăçлăхне хăпартассишĕн кĕрешнипе пĕрлех, парниксемпе теплицăсенче тата пахчасем çинче лартса ÿстерекен пахча-çимĕçсен калчисене лайăх пăхса, тухăçлă пахча-çимĕç илессишĕн кĕрешмелле. Ана-йăран çине (ирĕке) лартса тăвакан пахча-çимĕçсенчен çуррине ытла малтан парниксенче, пахчасем çинче калчан ÿстернине манмалла мар. Апла пулсан парниксемпе теплицăсенче пахча-çимĕçсене хĕллех лартса, иртерех туса илессишĕн тăрăшнипе пĕрлех, ана-йăран çине, ирĕке лартса ÿстермелли пахча-çимĕç калчисене пăхса ÿстерессишĕн те тимлĕн тăрăшмалла. Пахча-çимĕç ăнса пуласси — калчана малтан лайăх пăхса ÿстернинчен те нумай килет.

Пахча-çимĕç калчисене парниксенче, теплицăсенче тата пахчасем çинче лартса ÿстернĕ чух малтанхи вăхăтра тĕрлĕ хурткăпшанкăсенчен, нимĕнрен ытла уй пăрçи тапăнасран сыхлама тăрăшмалла. Уй пăрçисене çийĕнчех пĕтермесен, вĕсем пысăк сиен кÿме пултараççĕ. Иртнĕ çулта Сĕнтĕрвăрри районĕнчи чылай колхозсенче куçарса лартнă купăста тата помидор калчисем çине уй пăрçи тапăнса пĕтĕмпех пĕтернĕ. Вара çав колхозсенче çĕнĕрен калчасем тупса лартма тивнĕ.

Çанталăк уяр тата ăшă тăма пуçласан уй пăрçисем пур çĕрте те хунама пултараççĕ, вĕсем купăста тата помидор çине тапăнаççĕ. Çак сиенрен пур колхозсен те малтанах сыхланса тăмалла.

Пăрачкав районĕнчи «Красногор» колхозăн ÿсекен тырри çине саранча тапăнса чылай сиен кÿнĕ. Çавăнпа вара сиенленнĕ тырра симĕслех çулма тивнĕ. Çак «ăнсăртлăх» утă çулнă тата тырă вырма тухнă вăхăтра пулнă пирки лаша, çын тата машина вăйĕсене хĕрÿ ĕçрен уйăрма тивнĕ. Тырпулсене уйран пуçтарса кĕрес ĕçсем кая юлнă, тырпул та хирĕ тăкăннă. Саранчана хирĕç кĕрешме пĕтернĕ химикатсемшĕн те питĕ нумай укçа расходланă. «Красногор» колхоз тырпулсене сиенлекенсенчен ялан сыхласа, асăрхаса тăнă пулсан, саранча тапăнма пуçлани палăрсанах хăвăрт мерăсем йышăннă пулсан, унашкал пысăк сиен курман пулнă пулĕччĕ.

Пăрачкав тата Кувакино районĕсенчи хăшпĕр колхозсен уйĕсенче кăçал та саранча тухасса кĕтмелле. Мĕншĕн тесен иртнĕ çулта ку районсенче саранча çăмарта туса хăварнă вырăнсене палăртнă. Çавăнпа та саранчана хирĕç кĕрешме ку районсенчи колхозсем çеç мар, республикăри мĕнпур колхозсем хатĕр тămалла.

Пăрçа йышши культурăсем çине гороховая тля текен вĕтĕ хурт тапăнать. Тля тапăнас вăхăт пăрçа чечеке ларнă тата хутаççисем тытăннă вăхăтра пулать. Нÿрĕ çанталăк тля хурчĕсене хунама питĕ лайăх условисем парать. 1932 çулта Чăваш республикинчи кăнтăр енчи (Елчĕк, Комсомольски, Шăмăршă, Чкаловски тата Первомайски) районĕсенче тля тапăннипе пăрçа культури пĕтĕмпе майлах пĕтнĕ. 1937 çулта та тля тенĕ хурт Канаш, Тăвай, Йĕпреç районĕсенчи колхозсен пăрçине сиенленĕ.

Мĕнпур çĕрĕç оргăнĕсен, колхозсен, агрономсен тляпа кĕрешме малтанах хатĕр тămалла. Мĕншĕн тесен, тля пăрçа çине тапăнсан, çав кунах пăрçа çулçисене чĕркесе варрине пытанса выртать, тляна пĕтерме сапнă химикат тля çине лекмесĕрех çĕре юхса каять.

Пирĕн пахча-çимĕçсене, тырпулсене ÿснĕ вăхăтра сиенлекен хурткăпшанкăсенчен тата тĕрлĕрен чир-чĕрсенчен сыхлассине колхозсем тата çĕрĕç оргăнĕсем чылай çĕрте çителĕклĕ хакламаççĕ. Сиенлекен хурткăпшанкăсене хирĕç кĕрешме вĕсем тырпула сиенлеме тапăнсан, палăрмалăх сиен кÿрсен тин тытăнаççĕ. Кĕрешĕве вăхăт иртсен тин тытăннинчен усси сахал. Сиенлекенсене хирĕç çителĕклĕ кĕрешес тесен, вĕсем тырпулсемпе пахча-çимĕçсем çинче палăриччĕнех профилактикăллă мероприятисем туса иртгерес пулать.

Çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕ колхозсенчи ялхуçалăх культурисене сиенлекен хурткăпшанкăсемпе кĕрешесси çинчен постановлени йышăнчĕ. Вăл постановленире кăçалхи çул ялхуçалăх культурисене сиенлекен хурткăпшанкăсемпе кĕрешес пирки хăш районта мĕн тумаллине пĕтĕмпех палăртнă. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райсовет исполкомĕсене, МТС тата МТМ директорĕсене, райçĕрĕç отделĕсене ялхуçалăх культурисене сиенлекен хурткăпшанкăсемпе тата чирсемпе кĕрешмелли аппаратсене юсаса, хатĕрлесе хума, хурткăпшанкăсене пĕтермелли эмелсене кирлĕ таран кÿрсе килме хушнă. Кашни колхозранах пĕрер çын уйăрса, вĕсене çывăх кунсенчех хурткăпшанкăсене хирĕç кĕрешме вĕрентекен кĕске срoклă семинарсенче вĕрентсе хатĕрлемелле.

1000 гектар çĕр лаптăкĕ çинче саранчана хирĕç кĕрешес ĕçсене самолетсемпе усă курса иртгерме йышăннă.

Пахча-çимĕçсене тата тырпулсене сиен кÿрекен хурткăпшанкăсемпе, çавнашкалах чир-чĕрсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе тумалли черетри ĕçсенчен пĕри вăл — тырпулсене çумкурăксенчен тасатасси, ирхи çĕртме сухаласси пулса тăрать. Ирхи çĕртме туни чылай çумкурăксене, сиенлекен хурткăпшанкăсене пĕтерме пулăшать. Анчах çĕртме тунă пусăва çу каçипех таса тытас пулать, çумкурăксене ÿсме ирĕк памалла мар.

Тырпулсем хушшинче ÿсекен çумкурăксене çеç мар, çул çинче, ана-йăран çинче, вар хушшисенче, лупашкасенче, кил вырăнĕсенче ÿсекенсене те çумласа, пĕтерсех пымалла. Пусу çаврăнăшне тĕрĕс йĕркелесе, культурăсене йышăннă схема тăрăх улăштарса акса пыни те çумкурăксене пĕтернĕ çĕрте пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çумкурăксене вăхăтра пĕтерни — ялхуçалăх культурисене сиен кÿрекенсен йăвисене пĕтерни пулать.

Агроном **Т. НИКИТИН.**

БИБЛИОГРАФИ

„Социал-демократи наци ыйтуне мĕнле ăнланать?“

Сталин юлташăн çакăн пек ятлă брошюри февраль уйăхĕнче чăвашла пичетленсе тухрĕ. Вăл статьяна 1904 çулти, сентябрĕн 1-мĕшĕнче «Борьба пролетариата» ятлă хаçатра грузин чĕлхипе пичетлесе кăларнă. Вырăс чĕлхипе вăл журналсенче чи пирвайхи хут 1939 çулта тухнă.

Çав статьяра Сталин юлташ кайрантарахпа хăйĕн «Марксизм тата наци ыйтăвĕ» ятлă ĕçĕнче малалла аталантарнă идейăсене панă.

Империализм эпохинче наци ыйтăвĕ марксизм-ленинизмра тĕп вырăн йышăнса тăракан ыйтусенчен пĕри, урăхла каласан, тĕнчери революци ыйтăвĕн, пролетариат диктатури ыйтăвĕн пайĕ пулса тăрать. Нациллĕ-колониллĕ ыйтупа хăйсен вăхăтĕнче Маркспа Энгельс та шит нумай ĕçленĕ. Вĕсем çапла вĕрентнĕ: ытти халăхсене пусмăрта тытса усракан халăх ирĕклĕ халăх пулма пултараймасть. Маркспа Энгельсăн наци ыйтăвĕ тĕлĕшĕнчи идейисене Ленин империализм условийĕсенче малалла аталантарса пынă. «Çак енĕпе, — тесе çырать Сталин юлташ, — Ленин ĕçĕнчи çĕнни çакăнта пулса тăрать: а) вăл çав идейăсене империализм эпохинчи нациллĕ-колониллĕ революцисем çинчен калакан пĕр стройлă системăна пухса пĕтĕçтернĕ; б) нациллĕ-колониллĕ ыйтăва империализма сирпĕтсе антарас ыйтупа çыхăнтарнă; в) нациллĕ-колониллĕ ыйту тĕнчери пролетариллĕ революцин уйăрми ыйтăвĕ пулса тăрать, тесе пĕлтернĕ» (И. Сталин, «Вопросы ленинизма», стр. 172, 11-е изд.).

Ленинпа Сталин империализма сирпĕтсе антарас тĕллевпе çĕкленнĕ нациллĕ движенисем майлă тăнă, вĕсем: пусмăрта пурăнакан халăхсене империализм резервисем пулса тăнинчен пролетариллĕ революци резервисем туса хума кирлĕ, тесе шутланă.

Сталин юлташ, Ленинăн гениллĕ ученикĕ пулса, практикăллă революциллĕ пысăк опытпа нацисен большевикла теорине тĕплĕн çутатса панă, вăл наци ыйтăвне татса парас ĕçри чаплă ăста пулса тăрать. Наци ыйтăвне наука енчен тĕпчесе вĕреннĕ май, Сталин юлташ хăйĕн ĕçĕсенче çакна тĕплĕн кăтартса панă: нацисем пуçланса кайни пĕр паллă историллĕ эпохăпа çыхăнса тăрать, çынсем нацисене йĕркеленесси капитализм аталанма тытăннă май, капитализм çÿлелле хăпарнă эпохăра пуçланать.

Вăл нацисене классикла определени панă.

«Как понимает социал-демократия национальный вопрос?» ятлă статьяна Сталин юлташ нумай нациллĕ Кавказ условийĕсенче çырнă, вăл вăхăтра Кавказ çапла империализмлă пусмăрлăхăн тата эксплоатацин вучахĕ пулса тăнă. Кавказри промышленноçра ĕçлекен нумай нациллĕ пролетариат йышлă пулнă, унта царизм пĕр националноçа тепĕр националноçа хирĕç хĕтĕртсе тăнă, çапла майпа рабочисен тимлĕхне политикăллă кĕрешÿрен аяккалла сирме хăтланнă.

Сталин юлташăн çулте асăннă статьи РСДРП-ăн II съездĕнче йышăннă наци программин чаплă комментарийĕ пулса тăнă. Кашни класах, вăл хăй аллине илнĕ хыççăн, хăйĕн интересĕсем тăрăх наци ыйтăвне хăй майлă лартать. Пролетариат, çĕнĕ класс, çуралнă хыççăн пролетариатăн «наци ыйтăвĕ» тухса тăрать, тесе ăнлантарса парать Сталин юлташ хăйĕн çав статьинче. Вăл феодаллă-монархиллĕ тата буржуаллă «национализма» хаяррăн критиклет. Сталин юлташ çакна кăтартса парать: меньшевиксем, эсерсем тата Кавказри «социал-федералистсен» партийĕ пулăшнипе, буржуази никама пăхăнман Грузия çинчен сÿпĕлтетнĕ, çакна вăл пролетариата хăй енне çавăрас шутпа тума хăтланнă.

Патшан реакциллĕ самодержавине хирĕç кĕрешнĕ çĕрте, пролетариат диктатуришĕн кĕрешнĕ çĕрте, социал-демократла партин вырăс пролетарийĕсене кăна мар, тата Российăри мĕнпур националноçсен пролетарийĕсене те пухмалла пулнă. Российăри тĕрлĕ нацисен пролетарийĕсене пĕр-пĕринпе çывхартса, вĕсене Российăри пĕрлĕхлĕ пĕр партие, пĕр центр ертсе пыракан партие пĕрлештермелле пулнă. Çакна тăвас вырăнне Кавказри «социал-федералистсем, австромарксистсемпе бундовецсем хыççăн пырса, буржуазие усă кÿрес шутпа, темĕнле «нациллĕ духа тата унăн свойствисене» хÿтĕлеме ыйтнă. Вĕсем нациллĕ уйрăм партисем, ертсе пыракан темиçе центрлă партисем тума тăрăшнă, çапла майпа вара Российăри пролетариата сапалантарса ярса, Грузи буржуазине вăйлатасшăн пулнă.

Сталин юлташ çав статьяра большевиксен партийĕ ячĕпе тухса каласа, большевикла программăн тĕп пункчĕсемпе принципĕсене тĕплĕн палăртнă, наци ыйтăвне татса памалли пролетариллĕ, интернационаллă методăн чи лайăх образецне кăтартса панă.

Пирĕн большевикла партин наци ыйтăвĕ тĕлĕшпе марксистла программа пулнă. Вăл «...нацисен тулли пĕртанлăхĕшĕн тата нациллĕ пусмăрлăхпа нациллĕ танмарлăхăн пур формисене те пĕтерессишĕн» тăтăклă та вĕçне çитиех кĕрешнĕ («ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ», стр. 182).

Вăл наци ыйтăвне татса парассине, мĕнпур йышши оппортунистсем пек, реформăсенче мар, революциллĕ майпа капитализмлă стройăн никĕсĕсене тĕпренех çĕмĕрсе аркатнинче курнă.

Империализм условийĕсенче социализмлă революцин союзникĕсемпе резервисем çинчен тăракан ыйтăва туса хатĕрлемелле пулнă. Ленинпа Сталин çакна пурнăçа кĕртнĕ те ĕнтĕ. Октябрьти Социализмлă революцие тата ленинла-сталинла наци политикине пула, икĕ фронта — великодержавнăй шовинизма, çавăн пекех тата вырăнти национализма хирĕç пынă кĕрешÿре пирĕн нумай нациллĕ социализмлă государство çуралчĕ тата вăл малалла аталанса пырать. Нациллĕ пусмăрлăх, тăшманлăх, путарса тата эксплоатацилесе пурăнни вырăнне, халăхсен аслă туслăхĕ пулса тăчĕ. Сталинла Конституци ССР Союзĕнчи мĕнпур граждансене, вĕсен националноçĕпе расине пăхмасăр, пурнăçăн пур облаçĕсенче те пĕртан правăллă туса хучĕ. Пролетариллĕ интернационализмăн ялавĕ айĕнче, пирĕн çĕршывра наци ыйтăвне тивĕçлипе татса панă, пусмăрта пурăннă халăхсем «...чăн-чăнах ирĕклĕ тата чăн-чăнах пĕртан халăхсен ретне этемлĕх историйĕнче шит вайхи хут кĕчĕç, хăйсен примерĕпе пусмăрта пурăнакан пĕтĕм тĕнчери халăхсене хавхалантарчĕç» (И. Сталин, «Вопросы ленинизма», 178 стр., 11-е изд.).

Çак вырăсларан чăвашла куçарнă брошюра «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» V-мĕш сыпăкĕнчи 3-мĕш раздела тата VII-мĕш сыпăкри 2-мĕш раздела вĕреннĕ чухне наци ыйтăвне тарăннăн тата пур енчен те ăнланса илме пулăшакан лайăх пособи пулса тăрать.

Пирĕн шутпа, тĕпрен илсен, вырăсларан ăнăçлă, ăнланмалла тата вулама çăмăл чĕлхепе куçарнă. Вырăсларан куçарнин чĕлхипе стильне кăтартса пама эпир вырăсла текстран пĕр предложени кăна илсе кăтартатпăр: «Беспощадные атаки грузинских марксистов, в особенности мощное классовое столкновение, превратившее в один социалистический отряд русских, армянских, грузинских и других пролетариев, — нанесли нашим буржуазным националистам сокрушительный удар и изгнали их с поля борьбы» (И. Сталин — «Как понимает социал-демократия национальный вопрос?», стр. 5, изд. 1940 г.). Çак предложенине çапла куçарнă: «Грузин марксисчĕсем нимĕн хĕрхенмесĕр туса пынă атакăсем, пуринчен ытла вырăс, армян, грузин тата ытти пролетарисене социалистла пĕр отряд туса хунă хăватлă класлă тытăçу, — пирĕн буржуаллă националистсене çавтери вăйлăн çапса хуçрĕç те вĕсене кĕрешÿ хирĕнчен хăваласа ячĕç» (чăвашла куçарни, стр. 5). Çакăн пек ĕнтĕ вырăсларан чăвашла куçарнин чĕлхипе стилĕ. Анчах вырăсларан чăвашла куçарнинче çитменлĕхсем те пур. Фактсене илсе кăтартăпăр. Сăмахран, вырăсла текстра çапла калать: «Достаточно было событиям общественной жизни слегка коснуться этого и без того слабого «движения», чтобы разрушить его до основания» (çавăнтах, стр. 3—4). Ăна çапла куçарнă: «Обществăллă пурнăç событийĕсем çав унсăрăнах тĕрексĕр «движение» çăмăллăн пырса тивни те çителĕклĕ пулнă, вара вăл тĕпренех салатса ишĕлсе аннă» (çавăнтах, стр. 4). Вăл предложенине çапла куçарсан лайăхрах тухнă пулĕччĕ: «çав тĕрексĕр «движение» обществăллă пурнăç событийĕсем çăмăллăн пырса тивни те çителĕклĕ пулнă, вăл вара, унсăрăнах тĕрексĕрскер, тĕпренех ишĕлме пултарнă».

Малалла тата çакăн пек пăсса куçарни пур. Вырăсла текстра çапла каланă: «До сих пор мы говорили о том, как не следует решать «национальный вопрос». Теперь поговорим о том, как надо решать этот вопрос, т. е. как разрешила его социал-демократическая рабочая партия» (çавăнтах, стр. 11)

Ăна çапла куçарнă: «Хальхи вăхăтчен эпир: «наци ыйтуне» мĕнле татса памалла марри çинчен каларăмăр. Халĕ ĕнтĕ çав ыйтăва, урăхла каласан, ăна социал-демократла рабочи парти мĕнле татса пама кирли çинчен калаçăр» (стр. 13). Кунта: «хальхи вăхăтчен» вырăнне «ку таранччен» тесе, «пама кирли» тени вырăнне — пани, тесе куçармалла пулнă, «ыйтăва» тенĕ сăмах хыççăн «мĕнле татса памалли çинчен» тесе хушмалла пулнă. Ахалĕн предложени шухăшĕ пăсăлать, мĕншĕн тесен «социал-демократия разрешила этот вопрос» тенĕ шухăш çухалать, урăхла каласан, ăна сиктерсе хăварнă.

Юлашкинчен тепĕр пример. Вырăсла текстра: «...разлила их по венам своей программы...» (çавăнтах, стр. 23), тесе каланă. Ăна çапла куçарнă: «вĕсене хăйĕн программине юн тымарĕсем тăрăх ячĕ те...». «Программине» тесе калас вырăнне «программин» темелле пулнă. Ахалĕн предложени çакăн пек пулса тухать: «свою программу разлила по венам».

Илсе кăтартнă çитменлĕхсем татах та тепĕр хут çакна кăтартса параççĕ: марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене куçарас тата куçарнине редакцилес тĕлĕшпе эпир хамăр умма лартакан требованисен виçине çитеймен-ха. Çакă вăл Чăвашгиза хăйĕн ĕçĕнче вырăсларан чăвашла куçарас тата куçарнине редакцилес ĕç çине питех те тимлĕн çаврăнса пăхма хушать.

Г. ИШИВАНОВ.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх апатне ӳстерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1941 çулти июнĕн 13-мĕшĕнче йышăннă постановлени

ССР Союзĕн Совнаркомĕ «Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç валли выльăх апатне ӳстерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен» йышăннă постановлени тăрăх Чăваш АССР Совнаркомĕ çапла йышăнать:

1. 1941 çултан пуçласа, колхозсем валли колхозсенчи фермăсенчи кашни выльăх пуçне вăтам шутпа çулталăкра выльăх апачĕ пухмалли план колхозсенче çакăн чухлĕ пулмалла тăвас (центнерпа):

РАЙОНСЕМ	Шултра апатсем, утă çине куçарса шутласан: Пĕр лаша пуçне	Мăйракаллă пĕр шултра выльăх пуçне	Пĕр сурăх пуçне	Сĕтеклĕ апатсем: Пĕр ĕне пуçне	Мăйракаллă шултра выльăхсен пĕр çамрăк выльăхĕ пуçне.	Пĕр сысна ами пуçне
Улатăр, Кувакино, Пăрачкав,	40	27	4	38	3	50
Çĕмĕрле, Шупашкар хули	40	24	2	35	3	50
Етĕрне	33,4	27	4	38	3	50
Элĕк, Советски, Вăрмар, Чкаловски, Красноармейски, Елчĕк	33,4	22,3	4	33	3	50
Ытти районсем	33,4	24	4	35	3	50

2. Шултра апатсем пухмалли плана пурĕ 860 пин тонна çирĕплетес, вăл шутра обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли, страховой запас тата государство поставкисем — 618 пин тонна. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апатсем 225 пин тонна пухмалла тăвас, вĕсене районсем тăрăх пĕрремĕш номерлĕ приложенипе килĕштерсе пайласа парас

3. Райсоветсен исполкомĕсене, выльăх апачĕ пухса хатĕрлеме çирĕплетсе панă нормăпа килĕштерсе, мĕнпур йышши апатсем тăрăх тайм виçипе палăртса хатĕрленĕ плана июнĕн 20-мĕшчен кашни колхоза çитерме хушас; çав плана туса хатĕрленĕ чухне колхозсем государствăна / обязательнăй йĕркепе утă тăратмалли обязательствăсене пĕтĕмĕшпе тултармаллине, колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕ валли мĕн кирлĕ таранах апатсем хатĕрлемеллине, çавăн пекех тата колхозниксем тӳрĕмех хăйсем усă куракан выльăх-чĕрлĕх валли ĕçкунĕсем тăрăх выльăх апачĕсем памаллине йăлтах шута илмелле.

4. Райсоветсен исполкомĕсене кашни колхоз валли выльăх апачĕ пухса хатĕрлемелли нормăсене палăртса çирĕплетнĕ чухне, çав нормăсене, ССР Союзĕн Совнаркомĕ йышăннă постановлени тăрăх, 20 процент таран пĕчĕклетме е ӳстерме ирĕк парас, анчах та ăна тунă чухне район тăрăх кашни пуç выльăх валли апатсем хатĕрлеме çирĕплетнĕ çулталăкри вăтам нормăна обязательно пăхăнса тăмалла.

5. Колхозсенче 1941 çулта силос хывмалли плана 100 пин тонна тата 1942 çулта хумалли плана 120 пин тонна чухлĕ çирĕплетес, вĕсене районсем тăрăх иккĕмĕш номерлĕ приложенипе килĕштерсе пайласа парас.

6. Чăваш АССР Наркомземне, райсоветсен исполкомĕсене МТС-чи тракторпа ĕçлемелли силосорезкăсене, колхозсенчи силосорезкăсемпе соломорезкăсене июлĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр юсаса çитермелле тума хушас.

Наркомзема, тракторпа ĕçлемелли пур пек силосорезкăсене шута илсе, 10 кунлă срокра МТС-сем валли выльăх апачĕсене силосламалли план туса çирĕплетме хушас, çав план тăрăх, тракторпа ĕçлеттермелли кашни силосорезка пуçне сезонра 800 тоннăран кая мар нагрузка ӳкмелле тумалла.

7. Чăваш АССР Наркомземне çапла тума хушас: колхоз производствине кĕртме силос культурисене тата выльăх апачĕ тумалли ытти культурăсене акса тунине сăнаса вĕренес тата вăл ĕçĕн опытне пĕрлештерес ĕçсене чăвашсен зоотехникăллă опытлă станцийĕн ĕç планне кĕртмелле.

8. 1942 çулта выльăх апачĕ тумалли тымар-çимĕçсемпе выльăх апачĕ тумалли бахча культурисем акмалли плана 6 пин гектар чухлĕ çирĕплетес, ăна районсене виççĕмĕш номерлĕ приложенипе килĕштерсе пайласа парас.

9. Выльăх апачĕ тумалли тымар-çимĕçсен сортлă вăрлăхĕсене тума вăрлăх рассадникĕсем вырăнне Калинински тата Красноармейски районсене уйăрас.

10. 1942 çулта нумай çула тата пĕр çула пыракан курăксем акса тумалли çĕр лаптăкне 85 пин гектара çитерес, вăл шутра: нумай çула пыракан курăксем акмалли лаптăксене 55 пин гектара, пĕр çула пыракан курăксем акмалли лаптăксене 30 пин гектара çитерес, вĕсене районсем тăрăх виççĕмĕш номерлĕ приложенипе килĕштерсе пайласа парас.

11. Чăваш АССР Совнаркомĕ райсоветсен исполкомĕсене тата райçĕрĕç пайĕсене çапла тума хушать: ССР Союзĕн Совнаркомĕ «Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç валли выльăх апатне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине ăнлантарса пама тата социализмлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла хăпартас, выльăх апачĕн базине çирĕплетес, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерес ĕç валли колхоз массисене мобилизацилемелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕн
Председателĕ А. СОМОВ.

Чăваш АССР Совнарком Ĕçĕсен
Управляющийĕ Г. ИВАНОВ.

Ӳкĕнмелли çук

Ылттăнăн-кĕмĕлĕн йăл-йăл курăнса ларакан мрамор тăвĕсем. Çав чул тăвĕсем çинче кантăр евĕр хура вăрман кашласа ларать. Тусен айĕнче хура тăпраллă уй. Уйра чĕркуççи таран ыраш калчисем тинĕс хумĕ пек чӳхенсе ӳсеççĕ. Уй варрипе кукăр-макăр авкаланса, юханшыв шăнкăртатса юхса иртет. Çак юханшыв тăрăхĕнче тимĕрпе, черепицăпа витнĕ, çуллă краскăпа сăрланă çуртсем таçтанах курăнса лараççĕ. Çак вырăнта ĕнтĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз вырнаçса ларнă. Вăл колхоз 1940 çулта июнь уйăхĕнче çеç пуçланса кайнă. Унăн организаторĕсем 13 хуçалăх—чăвашсем, 7 хуçалăх — мордвасем. Вĕсем пурте Чăваш республикинчи Первомайски районран çĕнĕ çĕре куçса килнĕ колхозниксем.

— Çак вырăн питĕ килĕшрĕ пире. Урăх вырăн шыраса çӳремерĕмĕр. Тӳрех пурăнма, ĕçлеме пуçларăмăр. Куратăр-и, мĕнле пурнатпăр эпир! Акмалли çĕр, çулмалли çаран, шыв, вăрман—пурте çителĕклĕ, алă айĕнче. Арман пирĕн хамăрăн. Хăма çуракан завод пур,—тесе пĕлтерчĕ колхоз председателĕ Н. Шлыков юлташ.

Чăнах та ĕнтĕ, илемлĕ вырăн. Колхоз пуян пурăнать. Çулталăк хушшинче колхозра 30 лаша туяннă, ĕне фермп тунă, унта 48 ĕне, сурăх фермине—78 сурăх. Сысна ферми пур, унта 8 сысна ами, вĕсем икшер хут сурласа панă. Çитес кĕркуннене 900 сысна çитĕнессе кĕтеççĕ. Кунсăр пуçне колхозниксем пурте те сыснасем туяннă. Пурте ĕнеллĕ, 2-шер ĕне тата 10—12-шер сурăх усракан колхозниксем те чылай.

— Карело-Финн республикине, çĕнĕ çĕре, эпир ахальтен мар куçса килнĕ. Пуян та культурăллă пурăнма. Кунтан ытла тата мĕнле пурнăç кирлĕ пире? Çĕрĕ мĕне тăрать! Иртнĕ çул эпир кашни гектартан 200 пăт тулă пуçтарса илтĕмĕр. Хĕлле выльăхсене утăпа сĕлĕ çеç çитеретпĕр. Вутă пирĕн пӳрт умĕнчех, çуркунне касса хатĕрлетпĕр,—тет колхоз членĕ С. Степанов юлташ.

Колхозниксем культура енчен те çитĕнсе пыраççĕ. Çак хушăра 200 çын вырнаçмалли клуб туса лартнă, пианино, хуткупăс пур. Каçхине, ĕç пĕрахсан, клуба çамрăксем, ваттисем пуçтарăнса савăнăçлăн канаççĕ. Хор кружокĕ тунă. Хор çĕнĕ юрăсем юрласа колхозниксене савăнтарать.

Ача çуратмалли çурт туса лартнă. Унта сестра тата акушерка ĕçлеççĕ:

— Кунта эпир хамăр колхозри хĕрарăмсене çеç мар, ытти колхозсенчи хĕрарăмсене те йышăнатпăр. Вырăн çителĕклĕ,—тет медсестра В. Куприянова юлташ.

Выльăх-чĕрлĕхсем чирлесен вĕсене уйрăм хупмалли выльăх вити пур. Унта ветфельдшер тата зоотехник ĕçлеççĕ. Хĕлле выльăхсене усрамалли витесене мрамортан тунă. Выльăхсене шăварма унтах водопровод пур, электричество çунать. Выльăх витисен умĕнчех силос хывмалли вырăнсене цементран тунă. Выльăх апачĕсене (утă, сĕлĕ) усрамалли вырăнсем витесен тăрриче. Выльăхсене апата норма тăрăх çитерессĕ. Çавăнпа та пĕр пĕрчĕ апат та сая каймасть. Выльăхсем тутă та самăр. Çулла выльăхсене витене хупмаççĕ, мĕншĕн тесен, вĕсем çавăнпех уйра, вăрманта кĕтӳре çӳреççĕ. Каçхине хупмалли уйрăм картасем тунă. Ĕçлекен лашасем валли уйрăм картасем. Вĕсене норма тăрăх сĕлĕ çеç пăраççĕ. Сыснасем те çавăнпех кĕтӳре, вĕсене те ир-каç çеç апат параççĕ. Çулталăкри сысна çурисем 8—10 пăтран кая таяканни пĕрре те çук. Ĕнесене кунне виçĕ хут сăваççĕ. Кашни сумассерен 8—12 литр сĕт илеççĕ. Çу, сыр, тăпăрч хатĕрлекен завод ĕçлет. Ĕне ферми колхоза кашни кун 750—800 тенкĕ тупăш парать.

Колхозăн 2,5 гектарлă сад пур. Кунта панулми, хурлăхан, хăмлаçырли, çĕрçырли ӳсеççĕ.

Иртнĕ кĕркунне колхоз 51 гектар ыраш акса хăварнă. Кăçал 88 гектар çуртри акнă. 14 гектар çĕрулми лартнă тата 10 гектар сахăр кăшманĕ акнă.

Халĕ ĕнтĕ тырăсене акса пĕтернĕ. Колхозниксем иртнĕ çул çапмасăр юлнă тырăсене çапаççĕ, мĕншĕн тесен колхозра ĕçлекенсем çитмен пирки чылай тырă çапмасăр юлнă.

— Иртнĕ кĕркунне колхозниксене ĕçкунĕ пуçне 4-шар килограмм тырă валеççе панăччĕ. Халĕ татах 3-шер килограмм тивет пулĕ. Тырăран эпир пуян. Ниçта хума çук,—тет Шлыков юлташ.

Кунти колхозсен тата колхозниксен пурнăçĕ çине пăхатăн та, пĕтĕм чĕререн савăнатăн. Тулли пурнăçпа пурăнаççĕ. Пур енчен те çителĕклĕ.

— Çĕнĕ çĕре куçса килнĕшĕн ӳкĕнмелли çук. Савăнатпăр çеç. Çĕр сахал вырăнти колхозниксене пирĕн пата килме чĕнетпĕр. Вĕсене те пирĕн пек тулли пурнăçпа пурăнма сĕнетпĕр, — тесе чĕнеççĕ колхозниксем пурте.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз ӳссе пырать. Кăçал унта татах 8 хуçалăх куçса пычĕç. Пыракансем валли пурăнма çуртсем çителĕклĕ. Государство та пулăшать: укçа парать, выльăх-чĕрлĕх туянтарать. Икĕ çул хушши нимĕнле налогсем те тӳлемеççĕ.

Тухса çӳремелли çулсем лайăх. Чугунçул станцинчен инçе мар пурăнаççĕ. Базар та çывăх: мĕн сутса-илес тенĕ—пурте çителĕклĕ. Аш-какай, сĕт-çу, тырă, çăнăх т. ыт. те...

Колхозниксем калаççĕ: ӳкĕнмелли çук. Пурнăç тулли те пуян.

М. ДАНИЛОВ.

Гурджаанский МТС директорĕ А. Даваташвили (сылтăмра) тата районри агроном Р. Бакурадзе урпа пулса çитнине тĕрĕслеççĕ (Грузин ССР).

И. ТОРИ фото-ӳкерчĕкĕ. (ТАСС).

Автономлă республикăсен спартакиади

Кăçал, август уйăхĕнче, Тутар республикин столицинче—Хусан хулинче — автономлă республикăсен спартакиади пулса иртмелле. Çак спартакиадăра автономлă республикăсен спортсменсем хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ, физкультурăпа спорт ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн ăмăртаççĕ.

Чăваш республикинчи спортсменсем 1938 тата 1939 çулсенче пулса иртнĕ спартакиадăсенче иккĕмĕш вырăна йышăнчĕç, 1940 çулта пулса иртнĕ спартакиадăра пирĕн республикăри спортсменсем виççĕмĕш вырăна тухрĕç. Ку вăл пирĕн республикăра çак пысăк ĕçе çителĕксĕр хатĕрленинчен килнĕ.

Кăçалхи спартакиадăна спортпа физкультура ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн ĕçе халех тытăнасси — физкультурăпа спорт организацисен тата вĕсене ертсе пыракан органсен чи пысăк задачи. Мĕншĕн тесен спартакиадăра мала тухасси кашни спортсменшăн, спартакиада участникĕшĕн хисеплĕ ĕç пулса тăмалла.

Анчах та, халĕ спартакиадăна хатĕрленмелли хĕрӳллĕ вăхăт пулин те, пирĕн республикăри спортсменсем çак ăмăртăва хатĕрленме тытăнни курăнмасть.

Иртнĕ спартакиадăра пирĕн республикăри спортсменсем велосипедпа чупас, шывра ишес, пăшалтан тӳрĕ перес, баскетболла выляс тĕлĕшпе чи кайри вырăна йышăнчĕç. Çаксене пула ĕнтĕ республика команди спартакиадăра малти вырăна тухайман. Çакна кăçал шута илмелле ĕнтĕ.

Баскетболла выляс тĕлĕшпе Шупашкар хулинчи малти вырăна тухассишĕн кăçал çуркуннехи ăмăртăва туса иртерчĕç. Анчах халĕ баскетбол вăййи çинчен урăх никам та аса илмест.

Велосипедпа чупас тĕлĕшпе хатĕрленесси питех те паллă вырăнта пулмалла. Çавăнпа та халĕ тренировка хĕрсе пымалла. Спартакиада пуçланасси кĕске вăхăт юлсан, нимĕн тума та çук. Çавна пула вара ку тĕлĕшпе нимĕн хатĕрленмен спортсменсенех спартакиадăна васкавлăн кăларса яма тивет.

Çăмăл атлетика тĕлĕшпе те çавнах каламалла. «Медик» стадионĕнче тĕрлĕ дистанципе чупса хăйсен результатне лайăхлатас тĕлĕшпе тренировка тăвакансем çук. СССР спорт мастерĕ М. Гущина, республикăри паллă легкоатлетик Петров (Йĕпреç) юлташсемсĕр пуçне, ытти спортсменсем стадионсенче, спорт площадкисенче хăйсене спартакиадăна хатĕрлес тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ. Граната перес, ядро ывăтас, çӳле тата инçе сикес тĕлĕшпе те лайăхрах тĕслĕхсем кăтартма хатĕрленни çук-ха.

Автономлă республикăсен спартакиадине хатĕрленессине ертсе пырасси—физкультурăпа спорт ĕçĕсен республикăри комитечĕн чи çывăх ĕçĕ пулса тăрать. Унăн республикăри чи лайăх физкультурниксене 54 çын суйласа илмелле, вĕсене спартакиада уçăличчен тĕле пур енчен те хатĕрлесе çитермелле. Анчах та халĕ çак ĕçе конкретлă тытăнни çук.

Р. ШАШКОВ.

Çĕнĕ артель

Маяк ялĕнче инвалидсен промысла артелĕ организациленĕ.

Артельте çĕвĕ çĕлекен, катка-пичке, урапа-çуна тăвакан производствăсем пулаççĕ. Августăн 1-мĕш тĕлне çул çӳрекенсем валли çурт туса пĕтермелле. Çаксене тума Чăвашкоопинсоюз 30 пин тенкĕ укçа уйăрса панă. Çĕвĕ çĕлекен производствăна ĕçе кĕртнĕ.

Артельте халĕ 36 çын ĕçлеççĕ. Кăçал артель 39 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларать.

1-МĔШ №-ЛĔ ПРИЛОЖЕНИ.

Чăваш АССР тăрăх 1941 çулта выльăхсем валли шултра тата сĕтеклĕ апат пухмалли план

(пиншер тоннăпа)

Районсем	Шултра апатсем: Пĕтĕмпе	Вăл шутран обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли, страховой запас тата государство поставкисем.	Обществăллă выльăхсем валли сĕтеклĕ апат
Улатăр	22,1	14,5	6,9
Элĕк	32,9	24,4	8,5
Вăрнар	30,0	23,0	7,8
Йĕпреç	24,2	17,5	6,2
Ишлей	37,6	26,7	10,4
Калинински	31,7	24,3	7,3
Канаш	29,1	21,2	6,9
Куславкка	28,7	21,1	8,4
Комсомольски	27,8	20,8	7,7
Хĕрлĕ Чутай	38,3	25,4	9,6
Красноармейски	36,6	27,6	8,7
Кувакино	20,2	13,5	5,7
Сĕнтĕрвăрри	24,1	15,7	5,9
Октябрьски	30,9	21,9	8,5
Первомайски	24,0	15,8	5,6
Пăрачкав	28,0	19,6	9,0
Советски	35,2	25,4	8,6
Сĕнтĕр	47,9	35,7	14,2
Вăрмар	34,1	24,2	8,8
Çĕрпӳ	41,9	28,8	9,8
Шупашкар	32,8	23,1	9,2
Чкаловски	22,1	16,8	6,3
Шăмăршă	21,2	15,2	5,9
Шăхасан	37,0	27,4	8,6
Çĕмĕрле	23,5	16,2	5,8
Етĕрне	31,2	22,5	8,4
Елчĕк	35,0	25,2	8,6
Тăвай	30,9	23,8	7,4
Шупашкар хули	1,0	0,7	0,3
ЧАССР тăрăх	860,0	618,0	225,0

2-МĔШ №-ЛĔ ПРИЛОЖЕНИ.

Чăваш АСС Республикинчи колхозсенче силос хывмалли план

(пиншер тоннăпа)

Районсем	Çулсем: 1941	1942
Улатăр	3,5	3,8
Элĕк	3,8	4,3
Вăрнар	4,2	4,7
Йĕпреç	3,1	3,6
Ишлей	4.0	5,0
Калинински	3,0	4,0
Канаш	3,3	4.0
Куславкка	4,1	5,0
Комсомольски	3,7	4,3
Хĕрлĕ Чутай	3,6	4.0
Кувакино	3,2	3,6
Сĕнтĕрвăрри	2,5	3,5
Октябрьски	3,3	4,0
Первомайски	2,7	3,4
Пăрачкав	4,0	5,0
Советски	3,6	4,5
Сĕнтĕр	5,0	6,0
Красноармейски	3,5	4,2
Вăрмар	3,2	4,0
Çĕрпӳ	4,2	5,0
Шупашкар	3,5	4,0
Чкаловски	3,5	4,0
Шăмăршă	3,4	4,0
Шăхасан	3,5	4,5
Çĕмĕрле	3,1	3,7
Етĕрне	3,1	4,3
Елчĕк	4,2	5,0
Тăвай	3,9	4,3
Шупашкар хули	0,3	0,3
ЧАССР тăрăх	100,0	120,0

3-МĔШ №-ЛĔ ПРИЛОЖЕНИ.

1941 çулта нумай çул ӳсекен, пĕр çул ӳсекен курăксем, тымар-çимĕçсем тата выльăхсене çитермелли бахча культурисем акмалли план

(гектарпа)

Районсем	Нумай çул ӳсекен курăксем.	Пĕр çул ӳсекен курăксем	Тымар-çимĕçсем тата бахча культурисем
Улатăр	1700	500	180
Элĕк	2150	1300	250
Вăрнар	1500	1200	180
Йĕпреç	1600	1000	180
Ишлей	2200	1500	240
Калинински	1700	1200	220
Канаш	1800	1200	210
Куславкка	1800	800	200
Комсомольски	2000	1200	230
Красноармейски	2100	1400	240
Хĕрлĕ Чутай	1700	700	210
Кувакино	1800	600	240
Сĕнтĕрвăрри	1200	600	120
Октябрьски	2400	1200	210
Первомайски	1700	775	150
Пăрачкав	1800	900	270
Советски	1900	1300	210
Сĕнтĕр	2450	700	250
Вăрмар	2900	1500	300
Çĕрпӳ	2750	1500	300
Шупашкар	1800	900	200
Чкаловски	2000	1200	220
Шăмăршă	2000	900	140
Шăхасан	2400	1400	200
Çĕмĕрле	1500	800	140
Етĕрне	1500	900	170
Елчĕк	2500	1500	300
Тăвай	2100	1300	230
Шупашкар хули	50	25	10
ЧАССР тăрăх	55000	30000	6000

Шкул участокĕсем çине йывăççем лартаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри чылай шкулсенче вĕренекенсем хăйсем вĕренекен шкулсен картисене илемлетес, симĕслетес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тăваççĕ. «Красный Октябрь» колхозри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем шкул картине 538 тĕп тĕрлĕрен йывăççем лартрĕç. Пренешри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем хăйсен физкультура площадки йĕритавра 60 тĕп улмуççи тата 80 тĕп топль лартса хăварчĕç.

Молгачкинăри çамрăк натуралистсем те паха ĕçсем тăваççĕ. М. Охрамов, А. Козлова, П. Ефиторов т. ыт. юлташсем хăйсен ялĕнчи вулав çурчĕ тавра 44 тĕп йывăç лартса симĕслетрĕç.

Малтанлăха шутланă тăрăх, кăçал шкул ачисемпе çамрăк натуралистсем пĕтĕмпе 3000 тĕп ытла тĕрлĕ йывăççем лартнă. Ку ĕçе 1200 ачана явăн хутшăннă. Çĕмĕрлери çамрăк техниксемпе натуралистсен станцийĕ йывăççем лартас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕшĕн 50 вĕренекене преми пама çамрăк натуралистсен центральнăй станцине тăратнă.

Мухтавлă ĕç

Сала больницинчи ача çуратмалли отделени çутă, пысăк çуртра вырнаçса тăрать. Кунта пурĕ 15 койка, вĕсем нихăçан та пушă лармаççĕ. Юлашки пилĕк çул хушшинче ку больницăра ыратнине туймасăр ача çуратассине пурнăçа сарлакан кĕртсе пыраççĕ.

Пирĕн ача çуратмалли отделенинче йывăрçын пулнă тата çăмăлланнă хĕрарăмсем хушшинче воспитани ĕçне анлăн сарнă. Вĕсем валли врачсем тăтăшах лекцисем вуласа параççĕ, йывăрçын пулнă вăхăтра тата ача çуратнă хыççăн хĕрарăмсен хăйсене мĕнле тытмаллине, ачасене мĕнле пăхса ӳстермеллине каласа параççĕ.

Кăçалхи апрель уйăхĕнчен пуçласа пирĕн отделенинче тин çуралнă ачасене туберкулез чирĕнчен прививкăсем тума пуçланă.

Уйрăмăнах çакăн пек прививка туберкулезлă çемьери ачасемшĕн питĕ усăллă, мĕншĕн тесен çемьере çавăн пек чирлĕ çынсем пулсан пĕчĕк ача туберкулез чирне часах ерсе, пĕчĕклех вилме пултарать. Çак пит паха мероприяти нумай ачасене вăхăтсăр вилĕмрен çăлса хăварма пултарĕ.

Иртнĕ çулта Куславкка районĕнче ача çуратнă хĕрарăмсенчен 85 проценчĕ больницăра çуратнă пулнă.

Партипе совет правительстви пирĕн çине, ача çуратмалли çуртсенчи врачсем çине, хунă пысăк обязанносене эпир хамăрăн кулленхи ĕçсенче чыслăн пурнăçласа пыма тăрăшатпăр.

Врач. **А. ЯСНИЦКАЯ.**

Сала больници,
Куславкка районĕ.

РАЗВЕДКĂРАН ТАВРĂННИ

(„Истребители“ повĕçрен илнĕ сыпăк)

Сергей хăй истребителĕн çуначĕ айĕнче выртать, вĕçсе кайнă звено çинчен пикенсех шухăшлать. Разведка мĕн иккенне пит лайăх пĕлет вăл; тăшман мĕскер хăтланнине кайса пĕлсе килесси мĕнле йывăрлăхсемпе тата мĕнле хăрушлăхпа сыхăнса тăни те паллă ăна...

Гусс, Бобарыхин тата Кустов летчиксенчен тăракан звено, кӳлĕ урлă шыва тивес пекех аялтан вĕçсе каçнă хыççăн, тăшман вырнаçнă çĕре вирхĕнсе тухрĕ. Мĕн кирлине йăлт сăнаса пĕлсен, летчиксем çӳлелле, пĕлĕтсем хушшине, çавтери хăвăрт хăпарма пуçларĕç, кăна вĕсем хăйсене тăшман зенитчикĕсем сăнаса илсе пеме тытăннинчен вĕçерĕнес шутпа турĕç. Пирĕн истребительсем кĕрсе пытанма шутланă пĕлĕт пин метртан та ытла юлманччĕ пулĕ, анчах, çак вăхăтра, унтан кĕл тĕслĕ пĕчĕк машинăсем сиччĕн чăмса тухрĕç.

Тăшман каялла таврăннă вăхăтпа усă курма шут тытнă мĕн, çунтармалли япаласем сахалланса çитсен пирĕн машинăсен маневр тăвасси хĕсĕкленессе шута илнĕ иккен вăл. Анчах, пирĕннисем тăшманăн çак меслетне тахçантанпах пĕлеççĕ. Пирĕннисен халĕ ĕнтĕ тĕп задача акă мĕнре: хăйсене салатса яма памалла мар, строя пăрахса каймалла мар тата юлташ машинин хӳрине тăшман атакăласран çирĕп сыхласа пымалла. Çакна вĕсем пит лайăх ăнланаççĕ. Стройпа тата хăйсен пулемечĕсемпе пĕр-пĕрне сыхласа пынă чухне, вĕсен икĕ хут вăйлăрах тăшмана хирĕç сыхланма та яланах шанчăк пулать. Сыхланма кирлех, мĕншĕн тесен разведка результатне çитсе пĕлтермелле.

Çапăçу хăвăрт сарăлса кайрĕ. Тăшман хăпма пĕлмесĕр тапăнса пырать. Пирĕн истребительсем ăнăçлăн сыхланса çапăçаççĕ. Тăшман истребителĕсене хăйсен хыçне—огневой позицине—пырса тухма парас мар тесе, вĕсем тĕлĕнсе каймалла маневрсем тăваççĕ. Çапла майпа хамăрăннисем вырнаçнă енне çитсе тухма май килчĕ. Кунта ĕнтĕ кама та пулсан персе антарас-мĕн пулсан, е ирĕксĕр анса лармалла лексен, тăшман аллине летчик та, разведка результачĕ те лекес çук.

Тăшман истребителĕсенчен пĕрне Бобарыхинпа Гусс персе янă пульăсен черечĕсем тĕл пырса тиврĕç. Пĕлĕтре хăй хыçĕнчен çăра хура тĕтĕм хăварса пырса, вăл çĕрелле пит хăвăрт ӳкме пуçларĕ. Самолет çĕре пырса çапăннă хыççăн, çап-çутă çулăм сирпĕнсе тухни курăнчĕ. Анчах тăшман хăвалама пăрахмашкăн шухăшламасть те. Вăл, яланхи пекех, çирĕп пулнипе палăрса тăрать.

Персе антарнă истребителе пăхма пăрахсан, Бобарыхин сасартăк Гусс кая юлнине сăнаса илчĕ. Çав хушăрах Гусс еннелле тăшманăн икĕ истребителĕ ыткăнчĕ. Тепĕр мăшăрĕ, юлташне пулăшма чăрмантарас шутпа, Кустов çине тапăнма пуçларĕ. Юлашки тăшманĕ Бобарыхин çине тăрăнса пырать. Бобарыхин хăйĕн мĕн тумаллине шутласа иличчен, Гуса атакăлакан машинăсем патне виççĕмĕшĕ çитсе хутшăнчĕ. Енчен, Гуса пулăшу памасан, ăна паллах, персе антараççĕ. Кăна Бобарыхин хăвăрт тавçăрса илчĕ.

Бобарыхин истребителе тӳптӳррĕн çӳлелле тытса хăй çине пырса тапăннă тăшман самолечĕ умĕнчен хăпса каять те, Гусс тавра явăнакан çăмха патне пырса тухать. Çав вăхăтра тăшмансенчен пĕри Гусс патне çитсе ун самолечĕ çине пулеметран тĕл тивекен черет кăларса ячĕ. Анчах, хăй патнелле ыткăнса сывхаракан Бобарыхина курсан, вăл тата Гуса йăлтах пĕтерсе тăкма сĕмсĕрленсе ун хыççăн пыракан тепĕр тăшманĕ Гусс патĕнчен пăрăнса Бобарыхина хирĕç карĕç.

Бобарыхин çакна лайăх ăнланать: тăшман летчикĕсем пилотаж техникине пит лайăх пĕлеççĕ, çапăçасса та пит ăста çапăçаççĕ, анчах вĕсем хăйсем çине тӳрех ыткăннине чăтса иртерме пултараймаççĕ. Çавăнпа та вăл хăйĕн хурчка майлă истребительне тӳрех тăшман самолечĕсене хирĕç тытрĕ. Унăн машини кĕл тĕслĕ истребительсен хушшинчи ансăр уçă еннелле пĕр пăркаланмасăр пырать. Вĕсем ĕнтĕ инçех те мар. Бобарыхина вĕсен моторĕсем çинчи уйрăм пайĕсем курăнма пуçларĕç. Пулеметсенчен перес-мĕн пулсан, хăй пичĕ çине сарă çулăмăн пайăркисем пырса сирпĕнессе те пĕлет вăл, анчах, темшĕн, çакă пулас çук пек туйăнать ăна халĕ. Çакăн пек чухне вĕсем пересси çинчен шутламаççĕ, мĕншĕн тесен нервăсем вырăнта мар. Халĕ мĕнпур тимлĕхĕ вĕсен пырса çапăнасран хăтăлассн çинче.

«А эпĕ пĕрер черет туртса парам»,— шухăшларĕ Бобарыхин, вара вăл машинăна кăшт сылтăмалла пăрчĕ, шăп тăшман истребителĕпе тĕлме-тĕл пулчĕ. Гашеткăна пуссассăнах истребителе сулахаялла тытрĕ. Çак хушăра вăл пулеметран пенĕ тăшман машинин моторĕнчен çутă-сарă çулăмăн ялавĕ сиксе тухнине курчĕ: «пулчĕ»—хускалчĕ шухăш. Халĕ ĕнтĕ мĕнпур тимлĕх иккĕмĕшне пĕтерсе тăкасси çинче шĕтĕçсе тăрать. Сасартăк Бобарыхина тăшман летчикĕн нервисем хăйĕннинчен начар мар пек туйăнма пуçларĕ: вăл сĕмсĕрленсех совет летчикĕн тӳптӳррĕн атакăланине йышăнса малаллах тăрăнать.

Тăшман самолечĕн силуэчĕ прицел трубкинче çавтери хăвăрт пысăкланса пырать. Акă вăл хĕлĕхсем хĕреслене пĕрлешекен çĕрте ĕнтĕ. Бобарыхин гашетка çине пусрĕ. Тăшман еннелле пулеметсенчен талккишпех пульăсем вăркăнма тытăнчĕç. Анчах тăшман пăрăнса кайма шутламасть. Ахăртнех, ăна мотор хӳтлет пулас. Шăп çак вăхăтра Бобарыхинăн иккĕленӳ çуралчĕ: кам-ха малтан пăрăнса кайĕ. Бобарыхин секундăна чылай вăрăма тăсăлакан хушă, кăткăс маневр туса илме çителĕклĕ вăхăт тесе шутлама хăнăхнăскер, сасартăк секунда калама çук кĕске хушă иккенне ăнланса илчĕ. Самолетсем пĕр-пĕрне хирĕç пилĕкçĕршер километрлă хăвăртлăхпа ыткăнаççĕ, сехетре пин километрлă хăвăртлăхпа çывхараççĕ вĕсем. Самолетсем хушшинче халĕ çĕр метртан та ытла мар. Ку вăл секундăн виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ чухлĕ вĕçмелĕх кăна. Çав вăхăтра йĕркеллĕн «раз» тесе те илейместĕн. Куç хупса илмелĕх хушăра Бобарыхинăн тата унăн тăшманĕн решени йышăнса ăна пурнăçа кĕртмелле...

Иккĕшĕ те пĕр вăхăтрах ручкăсене туйса илмелле мар, хускатса илчĕç. Бобарыхин тăшман айĕпе иртсе каяс тесе ăна хăй патĕнчен малалла тĕртрĕ. Тăшман пирĕн истребитель çийĕпе иртме шутласа хăй патнелле туртрĕ. Çавăн хыççăнах иккĕшĕ те атакăна çĕнĕрен кĕрсе кайма хатĕррине пытарса тăни сисĕнчĕ. Малалла мĕн пулса иртнине иккĕшĕ те уççăмлăн ăнланаймарĕç. Çаврăнса пăхнă хыççăн Бобарыхин тăшманăн кĕл тĕслĕ самолечĕ пĕр еннелле, унтан тепĕр еннелле сирпĕннине, вара тăвас килмен чухнехи пек ерипен штопр тăва-тăва çĕр çинелле анса кайма пуçланине курчĕ...

Ĕнтĕ Бобарыхин Гуспа мĕн пулнине пăхса илме васкарĕ. Гусс ку темĕн хăй çине тапăнса пыракан тăшмансенчен пĕрне пĕтерсе тăкма ĕлкĕрнĕ. Кĕтмен çĕртенех, ĕçсем хăйсене хирĕçле çаврăнса килнине курсан, тăшман истребителĕсем тара пачĕç...

Кĕл тĕслĕ машинăсен силуэчĕсем пĕлĕт хушшине кĕрсе пытанчĕç. Пирĕн истребительсем хамăрăннисем патне хăвăртрах çитес шутпа, ертсе пыракан патне пухăнчĕç. Çунтармалли япала баксенче çукпа пĕрех темелле. Çапăçу çинчен çăмах та пымалла мар пек ĕнтĕ, анчах, ертсе пыракан хăй летчикĕсене сасартăк: «внимание», тесе пĕлтерчĕ

(Юлашки 4-мĕш страницăра).

ЕВРОПĂРИ, АФРИКĂРИ ТАТА АЗИРИ ВĂРÇĂ

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Англипе Германи хушшинчи фронтра авиаци ĕçĕсем вăйланнă. Германи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, июнĕн 11-мĕшĕнче кăнтăрла тата ыран июнĕн 12-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи самолечĕсем кăнтăр тата центральнăй Англири вăрçă ĕçĕсемшĕн кирлĕ объектсем çине, çавăн пекех тата Шотландин хĕвелтухăç çыранĕнчи портсен сооруженийĕсем çине пырса тапăннă. Германин подводнăй лодки Англи суднисене путарнă, вĕсен пĕтĕм водоизмещенийĕ—22.700 регистровăй брутто-тонна.

Çав каçах Англи авиацийĕ Рур çине пырса тапăннă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, бомбăсене пуринчен ытларах Дуисбургпа Дюссельдорф çине пăрахнă.

Англи самолечĕсем çавăн пекех Булюнь, Кале порчĕсем çине тата Роттердамри доксем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

* * *

Вăтаçĕр тинĕсĕн бассейнĕнче халĕ те авиаци ĕçĕсем кăна пулăраççĕ. Ыран июнĕн 12-мĕш тенĕ чух çĕрле, тенĕ Итали командованийĕн сводкинче, Итали самолечĕсем Мальта утравĕ çинчи аэродромсем çине пырса тапăннă. Англи командованийĕ кăларнă коммюникере каланă тăрăх, Англи авиацийĕ Родос утравĕ çине татах тепĕр хут пырса тапăннă. Бомбăсем тивнипе взрывсем пулнă тата пушарсем тухнă. Калатора пысăк пушар пуçланнă.

Çурçĕр Африкăра, Тобрук патĕнчи фронтра, Германи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, артиллери ĕçĕсем палăраççĕ. Германипе Итали артиллерийĕ англичансен Тобрукри автотранспорчĕсемпе водохранилищисем çине, Итали авиацийĕ, тенĕ Итали сводкинче, Тобрукри снабжени пункчĕсемпе оборона сооруженийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи командованийĕ кăларнă коммюникере каланă тăрăх, Англи самолечĕсем Бенгази порчĕ çине, Бенинăри аэродром çине тата Дернăри, Гамбатри, Эль-Газалăри самолетсене лармалли площадкăсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Нимĕçсемпе итальянецсен Баркăпа Дерна хушшинчи çулпа пыракан мототранспорт колонни çине пулеметсенчен пырса пенĕ. 30 яхăн машинăна пĕтерсе тăкнă.

Хĕвелтухăç Африкăра, Абиссинире, Галла-Сидамо облаçĕнче тата Гондар районĕнче çапăçусем пыраççĕ. Итали корреспонденчĕ Аденран пĕлтернĕ тăрăх, англичансем вăйлăрах хĕсме пуçланипе Итали войскисем çĕнĕ позицисем çине чакнă. Рейтер агентствин корреспонденчĕ Аденран пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 11-мĕшĕнче Эритрейăра англичансем Ассаб портне туртса илнĕ.

Сирири фронтăн пур участокĕсенче те хаяр çапăçусем пыраççĕ. Июнĕн 10-мĕшĕнче каçхине тата июнĕн 11-мĕшĕнче ирхине, тенĕ Франци сводкинче, англичансем çĕнĕ чаçсене çапăçăва кĕртме, французсен позицийĕсене хирĕç вăйлă атакăсем тунă.

Ливанра Австрали войскисем, Англи эскадри пулăшнипе, Нахр-Эль-Касимия юханшывĕ патĕнчен çыран тăрăх çурçĕр еннелле кăштах малалла кайнă. Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Вишерен пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисемпе де Голль генералăн войскисем тинĕс флочĕн карапĕсем пулăшнипе Сайда патнелле куçса пыраççĕ (Бейрут патĕнчен кăнтăр еннелле 35 километрта). Францирен пĕлтернĕ тăрăх, хаяр çапăçусем хыççăн англичансем Мерджайуна туртса илнĕ. Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Дамаскран çапла пĕлтерет: Кисве патĕнчен хĕвелтухăç енче англичансем хаяр атакăсем тăваççĕ, вĕсене хирĕç французсем çине тăрса кĕрешеççĕ.

Сирири вăрçă ĕçĕсем пирки Гавас-ОФИ агентствин çар обозревателĕ çапла çырать: Сафедпа Эр Рамтран тухнă англичансен колоннисем Дамаска туртса илнĕ текен пĕлтерÿсем тĕрĕс мар.

Сирири фронтăн центральнăй пайĕнче, Хермон тăвĕ патĕнчи хĕвеланăç енче, тенĕ Франции кăларнă коммюникере, Францин Мерджайуна хÿтлекен чаçĕсен ирĕксĕрех çурçĕр еннелле, Хасбеи районне чакса каймалла пулнă. Хермонпа Джебель-Друз хушшинчи районра июнĕн 10-мĕшĕнче каçхине Франци войскисем авиаци пулăшнипе пысăк мар атакăсем тунă, Кисве патĕнчен кăнтăр енче, Англипе де Голль генералăн Дамаск патнелле пыракан войскисене малалла кайма чарса лартнă. Çак районра халĕ те çапăçусем пыраççĕ.

Гавас-ОФИ агентствин çар обозревателĕ çапла кăтартса парать: портăн центральнăй пайĕнче, Мерджайунпа Эль-Кунейтра хушшинче, французсен позицийĕсем оборона валли лайăх. Иордан юханшывĕн айлăмĕ тăрăх наступлени туса пыракан англичансене 1000 метр çÿлĕш высота çине хăпарма тивет. Кунта питех те пысăк шырлан пур, вăл Франци войскисене оборонăра лайăх пулăшма пултарать.

Хĕвелтухăç Сирире, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Абу-Кемаль патĕнчен наступлени туса пыракан англичансен мотомеханизированнăй колонни Дейр-Эз-Зорери аэродрома туртса илнĕ. Дейр-Эз-Зоре патĕнчен çурçĕр еннелле наступлени туса пыракан тепĕр колонна Рас-Эль-Айнăран иртсе кайнă, Акчекале çинелле наступлени туса пырать.

Июнĕн 12-мĕш. (ТАСС).

Японецсем Голланди Индийĕнчен тухса каяççĕ

ТОКИО, июнĕн 12-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японипе Голланди Индийĕ хушшинчи отношенисем йывăрланнине кура, Япони резиденчĕсене Голланди Индийĕнчен куçарса каяççĕ. Майăн 31-мĕшĕнче Японин 57 резиденчĕ тухса кайнă, паян 47 хĕрарăмпа ачасем тухса каяççĕ. Çывăх вăхăтра тапранса каякан пароходсем çинче пĕр пушă вырăн та çук.

Испанири хресченсем выçă вилеççĕ

ВИШИ, июнĕн 12-мĕш. (ТАСС). Испанири «Арриба» хаçат çапла пĕлтерет: хальхи вăхăтра Испанири влаçсем ялсенче продовольстви карточкисем тăвасси çинчен сÿтсе-яваççĕ. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, «Испанири ялсенчи хресченсем чăннипех те выçăпа вилеççĕ». Испанире çăкăр паекне çын пуçне 40 грама хăвариччен чакарни çинчен ятарласах çырнă статьяра хаçат çапла пĕлтерет: ăна чакарнин тĕп сăлтавĕ — Испание тинĕссем урлă тырă сахалрах пыма пуçланинче.

Ютçĕршывсенче

▲ Май уйăхĕнче Америкăри предприятисем çар самолечĕсем 1.334 самолет туса кăларнă, апрель уйăхĕнче 1.389 самолет туса кăларнă пулнă.

▲ Июнĕн 9-мĕшĕнче Бухарестри военно-полевой суд пăлхавçă-легионерсен çĕнĕ группин ĕçне пăхса тухнă. 23 çынна тĕрлĕ срокласа тĕрмене хупса лартмалла тунă, вĕсенчен пĕр çынна 10 çуллăха, пĕр çынна 6 çуллăха, 3 çынна 5-шер çуллăха каторгăна ямалла тунă.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Лермонтов выставки валли экспонатсем

Искусство ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Комитечĕ вырăссен аслă поэчĕ Лермонтов вилнĕренпе 100 çул тултарнă ятпа организацилекен выставка валли музей фончĕсенчен 200 экспонат уйăрса панă. Çак экспонатсем хушшинче—картинăсем, ÿкерчĕксем, гравюрăсем, литографисем т. ыт. те.

Государствăн Третьяковски галлерейинчен выставка валли искусствăн хаклă произведенийĕсене чылай уйăрса панă. Вĕсем хушшинче Лермонтовăн Заболотский ÿкернĕ портречĕ пур. Çакă вăл—поэтăн натурăран ÿкерсе илнĕ пĕртен-пĕр портречĕ.

Ленинградри вырăс музейĕ, государство Эрмитажĕ тата изобразительнăй искусствăсен А. С. Пушкин ячĕпе тăракан музейĕ те выставка валли экспонатсем уйăрса панă.

Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсене научнăй экспедицисем кайнă

Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсене Белорус ССР Наукăсен академийĕн экспедицийĕсем тухса кайнă. Тăпрасен институчĕ Вилейка, Барановичи тата Пинск облаçĕсене экспедицилле 4 отряд янă. Çуллахи вăхăтра кунта научнăй работниксем торф выртакан пысăк вырăнсенче геоботаникăллă тĕпчевсем туса ирттереççĕ.

Социализмлă ялхуçалăх институтĕнчи научнăй работниксен групни çак кунсенче Белосток, Вилейка тата Барановичи облаçĕсене тухса каять. Вĕсенче тăпрасене сăнаса тĕпчеççĕ. Çак ĕçсем Белорус СС Республикинчи мĕнпур тăпрасен карттине туса хатĕрлеме пулăшаççĕ.

Горький çырнă статьясемпе фельетонсем

Ленинградра СССР Наукăсен Академийĕн литература институчĕ А. М. Горький çинчен калакан материалсемпе тĕпчевсен виççĕмĕш сборникне пичетлесе кăларать. Çак сборнике Алексей Максимович «Журнал для всех» редакторĕ патне, çавăн пекех критиксем патне янă çырусене кĕртнĕ. Çав çырусенче аслă писатель литература çинчен мĕн каланисем пур, вĕсем хушшинче Лев Толстой çинчен Горький мĕн калани уйрăмах интереслĕ.

Сборникăн иккĕмĕш пайĕнче писатель творчествин уйрăм ыйтăвĕсем тăрăх, «Сокол çинчен хунă юрăна», «Амăшĕ» повеçпе «Хĕвел ачисем» пьесăна çырни çинчен тунă тĕпчевсем кĕнĕ. СССР Наукăсен Академийĕн литература институтĕнчи Горький комиссийĕн председателĕ профессор С. Л. Балухатый, литературовед К. Д. Муратовăпа пĕрле, юлашки кунсенче аслă писателĕн халиччен ниçта та регистрацилемен статьисемпе фельетонĕсене тупнă. Статьясемпе фельетонсем 300 яхăн шутланаççĕ.

Чи малтан çапса илнĕ тырăна государствăна параççĕ

Таджикистанри колхозсем чи малтан çапса илнĕ тĕштырăна обязательнăй поставкăсен шучĕпе государствăна параççĕ. Явански районри заготпункта Фрунзе ячĕпе тăракан, Дзержинский ячĕпе тăракан колхозсенчен 366 центнер урпа илсе пынă. «Коминтерн» тата «Янги-Юль» колхозсемпе ытти колхозсем государствăна тулă пама пуçланă.

ТЕАТР САМОДЕЯТЕЛЬНОÇĔН СМОТРĔ

Пиллĕкмĕш кун

Июнĕн 12-мĕшĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Атнарти драмкружок А. Кăлганпа В. Алагер çырнă «Нарспи» драмăна лартса пачĕ.

Тÿррипех каламалла, Нарспи рольне вылякан Р. Трифоновăсăр пуçне никам та хăйсен ролĕсене ăнăçлăн пурнăçлаймарĕç.

Нарспи ролĕнче учительница Р. Трифонова юлташ вылять. Сцена çинче вăл чăн-чăн пурнăçри пек вылярĕ. Вăл выляна чухне куракансем хумханмасăр ларма пултараймаççĕ, кашниех Нарспи патне кайса, ăна йывăрлăхран çăлас ĕмĕтпе лараççĕ.

...Нарспи телейне тупаймарĕ. Унăн çутă ĕмĕтне усал тĕнче ирсĕррĕн таптаса сÿнтерет. Нарспи ăнран тухать, ним тăвайман енне вăл пÿлĕхçĕрен пулăшу ыйтать, çÿçне тăрмалать.

Трифонова çак вăхăтра чăнах та куççуль юхтарсах йĕчĕ. Çакă куракансен шухăш-кăмăлне те хурлантарчĕ.

Михетер образне И. Иванов юлташ кирлĕ пек кăтартаймарĕ. Унăн сасси çеç çĕрме пуяннăни пек, хусканăвĕсем вара пурнăçри пек мар.

Михетер хăйĕн карчăкĕпе пĕрле Сетнерпе Нарспие пăсăрлантарать. Вăрçать вăл Нарспие, ÿпкелет. «Намăса ăçта чикес таперч?» — терĕ сасартăк. «Таперч» сăмаха оригинал çинче тупма çук, пулма та пултараймасть. Çавăн пекех, вылякан ытти юлташсем те «пускай», «ладно» сăмахсемпе пьеса чĕлхине пысăккăн пăсаççĕ.

Çапла пулин те драмăна лартнине халăх тимлĕн пăхса ларчĕ. Ку — пĕтĕмĕшпе илсен, драмкружок членĕсем япăх вылянине пĕлтермест. Пуринчен ытла, 68 çулхи колхозник А. С. Кряжинов юлташ шăпăрçă ролĕнче лайăх выляни савăнтарчĕ. Çакă факт пĕчĕккĕ пек, анчах та унăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Вăл — искусствăна çамрăксем çеç мар, ваттисем те юратни çинчен, колхозлă ялăн культурине хăпартас ĕçе вĕсем те активлăн хутшăнни çинчен уçăмлăн каласа парать.

Н. МИТТА.

Çамрăк ачасен пултарулăхĕ

ЭЛЕК, июнĕн 13-мĕш. (Телефон тăрăх, хамăр корр.). Ачасен районри олимпиадин иккĕмĕш кунĕнче Тури Вылăри туллимар вăтам, Сатлайкăри пуçламĕш тата Вырăс Сорăмри вăтам шкулсенче вĕренекенсем хăйсен пултарулăхĕсене кăтартрĕç. Сатлайкăри пуçламĕш шкулта 1-мĕш класра вĕренекен Фаина Пескова, Любовь Виноградова, Зоя Иванова тата Виктор Феофанов выступленийĕсем уйрăмах интереслă пулчĕç. Вĕсем пурте 8—9 çулхи ачасем. Пескова—«Детство», Феофанов—«Упа», Иванова—«Автан» т. ыт. сăвăсене аван каласа пачĕç. Вĕсемех тĕрлĕрен ташăсем ташларĕç, юрăсем юрларĕç. Вĕренÿре те вĕсем отличник тата ударник шутланаççĕ.

Заочник-учительсем

Чăвашсен педагогика институчĕпе учительсен институтне кăçал çуллахи сессине пурĕ 702 заочник-учитель килмелле. Сесси июнĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 14-мĕшне çитиччен пулса иртмелле. Кăçал ытти çулсенчи пек мар, заочник-учительсем сессине пĕрер эрне малтан пухăнма пуçларĕç. Июнĕн 10—11-мĕш тĕлне 31 çын килнĕ те ĕнтĕ. Заочниксем халь экзаменсемпе зачетсем пама хатĕрленеççĕ, хăшпĕрисем срокчен 1—2 предметсемпе экзамен тытрĕç те ĕнтĕ. Заочно вĕренме çĕнĕрен кĕрес текенсем те пухăнма пуçларĕç.

В. И.

120 пин тенкĕ пособи тÿленĕ

ÇĔМЕРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районра нумай ачаллă амăшсем государствăран çулсерен темиçе çĕршер пин тенкĕ пособи илеççĕ. Иртнĕ çулта вĕсене районĕпе 212 пин тенкĕ пособи тÿленĕ. Анастасия Кирюшина (Мăн Улхаш) пĕлтĕр 2 ачашăн 4000 тенкĕ, Татьяна Потапова (Вырăс Улхаш) 4.000 тенкĕ илнĕ, кăçал та вĕсем çавăн чухлех илнĕ. Анастасия Логинова (Хутар) йĕкĕреш çуратнă ачасемшĕн кăçалтан пуçласа 4000 тенкĕ илме пуçларĕ.

Кăçал 5 уйăх хушшинче пĕтĕм районĕпе (хуласăр пуçне) 120 пин тенкĕ пособи тÿленĕ.

Йывăççем лартаççĕ

Байсубино (Красноармейски р.) ялсоветĕнчи колхозсем урам хушшине йывăççем лартма тытăнчĕç. «Красноармеец» колхоз урам хушшине тата фермăсен килкартисене симĕслетес майпа 260 тĕп тĕрлĕ йывăççем лартрĕ.

Çавăн пекех, «Жнейка» колхоз та колхоз утарĕ тавра пĕтĕмпех йывăççем лартса тухрĕ.

Г. ТАНАЕВСКИЙ.

Пулă пĕви тăваççĕ

СЕНТЕРВАРРИ. Кĕçĕн Астакассинчи «Коминтерн» колхоз пĕве тума тытăннă. Пĕвене туса пĕтерсен унăн тарăнăшĕ 5 метр, сарлакăшĕ 25 метр, тăршшĕ 250 метр пулмалла. Шыв пĕтĕмпе 0,62 гектар çине сарăлмалла. Пĕвене туса çитерме пурĕ 2500 кубла метр çĕр ĕçĕ тумалла, халĕ 1150 кубла метр çĕр ĕçĕ тунă та ĕнтĕ

Пĕве тунă çĕрте кашни кунах 40—50 колхозник ĕçлеççĕ. Пĕвене тăвас тĕлĕшпе 51 çулхи колхозник Маеров ертсе пырать. Пĕве тунă çĕрте комсомолецсем тăрăшнине уйрăмăнах палăртмалла.

Туса пĕтерсенех пĕвене пулă яраççĕ тата унта хур-кăвакал ĕрчетме пулать.

В. Ю.

Лайăх ĕçлекен пиçмоносецсем

ТАВАЙ. Йантăрч почта уйрăмне кĕрекен пиçмоносецсем А. Терентьева тата И. Кондратьев юлташсем хăйсен ĕçне тăрăшса туса пыраççĕ. Терентьева пиçмоносец пулса 1937 çултанпа ĕçлет. Вăл икĕ яла хаçат-журналсем валеçсе парать. Хаçат-журнал сарас плана кашни уйăхрах 110—120 процент тултарать. Унăн кашни киле пĕрер хаçат тата журнал тивет. Хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра çитерет. Çавăнпа та ăна подписчиксем хисеплеççĕ.

Терентьева юлташ колхоз производствинче те лайăх ĕçлет. Обществăллă ĕçсене активлăн хутшăнать.

Çавăн пекех, И. Кондратьев 1932 çултанпа пиçмоносецра ĕçлет. Вăл та хаçат-журнал сарас плана 100 процент ытла пурнăçланă, 222 кило пурĕ 234 экземпляр хаçат-журнал килсе тăрать.

Н. И

С У Д

Аборт тутарнăшăн

ШАХАСАН. Ухман ялĕнче Ф. Евдокимова медицина енĕпе пĕлÿ илмесĕрех абортсем туса пурăннă. Вăл Канашри вагонсем юсакан заводри столовăйра ĕçлекен В. гражданкăна аборт тунă. Аборт тунă хыççăн çав гражданкăна больницăна илсе кайса вилĕмрен çăлса хăварнă. Пĕрремĕш участокри халăх сучĕ Евдокимова ĕçне пăхса тухса, ăна 8 çул хушши хупса усрамалла приговор йышăнчĕ.

Чăваш АССР Верховный сучĕн уголовнăй коллегийĕ халăх сучĕн приговорне çаплипех хăварнă.

ФУТБОЛ

Футбол вăййинче ССР Союзĕнчи пĕрремĕш вырăна тухассишĕн

ОДЕССА, июнĕн 11-мĕш. (ТАСС). Енер культурăпа кану паркĕнче ССР Союзĕнче пĕрремĕш вырăна тухассишĕн футболистсен матчĕ пулса иртнĕ, Ленинградпа Одессăри «Спартак» командисем вылянă. Вăйăра Одесса команди 3:1 шутпа çĕнтернĕ.

* * *

Июнĕн 12-мĕшĕнче Мускаври «Спартак» тата Киеври «Динамо» командисем вылянине курма Мускаври ĕççынисем вуншар пин çын пухăннă. Вăйăра «Спартак» футболисчĕсем 3:0 шутпа çĕнтернĕ. (ТАСС).

* * *

ЛЕНИНГРАД, июнĕн 12-мĕш. (ТАСС). Паян Ленин ячĕпе тăракан стадионра Ленинградри «Зенит» тата «Динамо» командисем вылянă. Кĕрешÿре динамовецсем 2:0 шутпа çĕнтернĕ.

„Динамо“—„Медик“

Ку таринччен пулнă вăйăсене Шупашкарти «Динамо» команди начартарах вылянине вăл вăйсăр составпа тухнипе тĕрĕсе кăларма пăхатчĕç. Нападенире вылякан А. Беспалов çукшăн «Динамо» командине вăйсăрлатнă состав тесе шутлатчĕç.

Июнĕн 12-мĕшĕнчи вăйăна динамовецсем хăйсен мĕнпур составĕпе хутшăнчĕç. Вĕсем çак кун футбол вăййипе хулари малти вырăна тухассишĕн «Медик» командипе тĕл пулса вылярĕç. Вăйă пуçлансан пĕрремĕш тайм пĕтиччченех нихăш команди те пĕр-пĕрин алăкне мяч тапса кĕртсе счет уçаймарĕç. «Динамо» командин те, «Медик» командин пекех, нападенире вылякансем мяча тапаймаççĕ. Тапсан та сеткăна мар, аякка тапаççĕ. Пĕрремĕш таймри вăйă интерессĕр пулчĕ, динамовецсем лайăх техника кăтартасса кĕтнĕччĕ, анчах кĕтни ахалех пулчĕ.

Иккĕмĕш тайм пуçлансан динамовецсем, вăйă никам çĕнтереймесĕрех пĕтессине шута илсе, противникăн алăкне ытларах тапăнма тытăнчĕç. «Медик» командин вратарĕ япăх вылянине пула динамовецсем мяч тапса кĕртрĕç. Иккĕмĕш мяча динамовец Горбунков тапса кĕртрĕ. Вăйă пĕтес умĕн «Медик» команди вратарĕн сеткăран тата тепĕр мяч кăларма тиврĕ, вăйă 3:0 шутпа вĕçленчĕ.

Колхоза кĕреççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ пирĕн республикăри колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлемелле туни çинчен йышăннă постановленине ăнлантарнă хыççăн, единоличниксен хуçалăхĕсем колхоза кĕме пуçларĕç. Юлашки 3 уйăх хушшинче районĕпе 133 хуçалăх колхоза кĕнĕ. Вăл шутран Шĕнерпуç ялсоветĕнче 13 хуçалăх, Кудемер ялсоветĕнче—5, Иккĕмĕш Чураш ялсоветĕнче—4, Энтри-Пасар ялсоветĕнче—8, Чăнкасси ялсоветĕнче—6 хуçалăх.

П. КОЗЛОВСКИЙ.

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

Н. И. Шелеби — Сăвăсемпе юрăсем. 1941 ç., 220 стр., хакĕ переплетпа 4 т. 50 пус.

Кĕнекене автор литературăра ĕçлеме тытăннăранпа 30 çул тултарнă майĕпе пичетлесе кăларнă. Кĕнекене автор ку таринччен çырнă сăвăсемпе юрăсенчен чи лайăххисене пухса кĕртнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Программа радиопередач

Ст. РВ—74, в. 943 м., вр. местное. **19 июня.** 18.45—«Участники ВСХВ 1941 года от Чувашской АССР». 19.15—Литературная передача—М. Ю. Лермонтов. «Мцыри».

Обе передачи идут на чувашском языке.

РАЗВЕДКĂРАН ТАВРĂННИ

Ю Л А Ш К И

Тÿпере, пирĕн зенитчиксем пенĕрен, шурă çаврашкасем пула-пула кайни курăнать. Вĕсем истребительсене тăшманăн виçĕ бомбардировщикĕ пирĕн тыла вĕçсе пынине кăтартаççĕ.

Ертсе пыраканни пулса тăнă вăхăта хăвăрт хакларĕ: совет истребителĕсем, тревогăпа вĕçсе тухнăскерсем, инçере пулĕ-ха. Вĕсем çитсе ĕлкĕриччен кунтан инçере мар вырнаçнă полевой лазарет çине бомбардировщиксем бомбăсене пăрахма ĕлкĕрĕç. Тăшман вăл аманнă çынсем тата медперсонал иккенне пăхса тăмасть. Кирек мĕн пулсан та бомбардировщиксене палăртнă çĕре çитме памалла мар. Ертсе пыраканни атакăлама кирлĕ, тесе шут тытрĕ. Хăй хыçĕнчи истребительсене тайăлса илсе: «пуçтарăнма» хушрĕ. Вăл вĕсен атакăна вĕçлеме бензин тата çапăçу валли патронсем çителĕкли пирки иккĕленет. Анчах та атака кирлĕ, çавăнпа ăна вĕçне çитермеллех. Звено командирĕ хыççăн истребительсем малти бомбардировщик çине вирхĕнчĕç. Вĕсене хирĕç бомбардировщикăн пур огневой точкисенчен те пулемет черечĕсем сирпĕнме пуçларĕç. Тăшман хăй çывăхне ямасть. Вăл çине тăрсах палăртнă вырăналла пырать. Ăна виççĕмĕш атака хыççăн кăна чĕртсе яма май килчĕ. Анчах вăл пирĕннисене те хакла ларчĕ: Гусс самолетне тăшман пулеменчĕн черечĕ пырса тиврĕ. Самолет летчика пăхăнми пулчĕ: Гусăн парашютпа сикмелли кăна ĕнтĕ. Вăл сикет, парашюта час уçмасăр аннă чух çунтарса янă бомбардировщик çинчен сикнĕ летчика хăваласа çитет. Тăшман ĕçĕсем те Гусĕнчен ăнăçлах мар мĕн. Унăн парашючĕ çине чĕрĕлсе кайнă бензин лекнĕ пулас. Вут-çулăм чĕлхисем выçăхсах пурçăна пĕтерсе пыраççĕ.

Сарă компинизонлă офицерăн кĕлетки çĕр еннелле хăвăртрах та хăвăртрах анма тытăнать. Юлашкинчен вăл ялкăшакан ракета евĕр вирхĕнме пуçлать, вара хăй тĕтĕмĕ ăшне хупланса çухалать.

Бобарыхинпа Кустов тепĕр бомбардировщикне атакăлама тытăнаççĕ. Кустова хÿре айĕнче, кăшт айккинерех, пулеметран пеме лайăх позици йышăнса илме май килет. Кунта тăшман пени хăрушă мар, кĕл тĕслĕ пысăк машина патне çывхарма пулать. Унăн истребителĕ ерипентерех вĕçекен бомбардировщика çăмăллăнах хăваласа çитет. Кустов шанчăклăн персе тивретмелле хушăна çывхарать. Патронсене кăшт та пулин перекетлесе хăварас тесе пĕртак пуçсăрланса илме лекет ĕнтĕ.

Позицине йышăннă. Кустов гашеткăна пусать. Халь ак, персен йĕр хăваракан пульăсен шурă çипĕсем тăшман самолетне тăрăнса кĕреççĕ. Унăн пульлисем лекекен вырăнтан çутă-сарă çулăм ялкăшса тухать ак.

Гашетка çинчен пÿрнене илмесĕр пырать-ха Кустов. Анчах пулеметсем сас памаççĕ: боезапас пĕтнĕ. Вăл спуска хăй вырăнне антарса лартать. Çĕр çинелле васкавлăн пăхса илет: госпиталь патне çывхарса çитнĕ мĕн. Кустов противникăн çуначĕ çинче элеронсем çăмăллăн хускалса илнине курать. Тăшман хатĕрленет; вăл боевой курс çине ÿкрĕ. Халех унăн бомбардирĕ прицел çумне йăпшăнĕ, аллине бомбăсене пăрахмалли хатĕр çине хурĕ. Темиçе çĕр килограмм бомбăсем аманнă боецсемпе врачсем, медсестрасем çине ÿкме пуçлĕç.

Кустов куçпа виçсе пăхать. Хăнăхнă ал-урисем ручкăна, педальсене хускатса илеççĕ. Сулахай алă газ çинче. Мотор шавĕ йăнăшса, шăхăрнă майлах илтĕнме пуçлать. Инçере сарăлса выртакан çĕр сулахай çунат айĕнче чĕвен тăрса пĕлĕтпе пĕрлешсе каять. Истребитель татах бомбардировщик хÿри айне тухать. Кустов, тутана хытă çыртнăскер, куçне илмесĕр бомбардировщикăн хÿри çине пăхать, ун çинче, чĕрĕ пекех, рульсен сийĕсем хускалаççĕ.. Ручкăна кăшт хăй патнелле туртать... Вăт йăлтах хатĕр. Кустов самолечĕ бомбардировщик хÿри çине винтпа пырса çапать. Çиелтен сăрнă дюраль таткаланса кайса сирпĕнет. Бомбардировщик çав хушăрах малалла тайăлать. Управленине çухатнăскер, çĕрелле анса каять. Тинех çăмăллăн сывласа илчĕ Кустов, мĕн шутлани йăлт пулса иртрĕ.

Ÿкекен самолета тимлесе пăхнине пула, Кустов хăй машинине çулăм хыпса илнине труках асăрхаймарĕ. Чăтма çук шăрăх пите пырса сăртăнсан тата ун çинчи кожанка пирус хучĕ пек ялкăшма тапратсан тин вăл пуç çине витсе тăраканнине пĕрре тĕртсех уçса пăрахрĕ...

Юлташĕсем кунсăр пуçне урăх нимскер те кураймарĕç. Кустова сиксе тухма май килмерĕ. Ун самолечĕ аялалла вирхĕнчĕ, персе антарнă тăшмана хуса çитме васканăнах туйăнчĕ. Темиçе секундăран аялта асар-писерле пысăк юпа сирпĕнсе çĕкленчĕ, ку вăл — вут-çулăмпа тĕтĕм тата тăпра пĕрлешсе сирпĕнчĕ. Бомбардировщикăн вилĕм кÿрекен япалисем çап-çара çеçенхире ÿксе çурăлчĕç...

...Хăй самолечĕн çуначĕ айĕнче выртакан Сергей пуçне çĕклесе итлеме пикенчĕ. Самолетсен шавĕ уçăмлăрах та уçăмлăрах илтĕнме пуçларĕ. Хăнăхса çитнĕ хăлхасем хамăрăннисене часах пĕлсе илчĕç. Сергей сулхăнран васкамасăр тухрĕ, çывăрса кайнă урисене тăскаласа майлаштарчĕ.

Аэродрома пĕр истребитель кăна анса ларчĕ, ăна урăх чаçĕн звени сыхласа килнĕ. Сергей шухăша кайрĕ.

Истребителе хăй вырăнне вырнаçтарса лартсан, Бобарыхин Сергее рапорт пачĕ, унтан Сергей штаб начальникне акă мĕн хушрĕ:

— Разведка результатне халех штаба самолетпа илсе çитермелле.—Хумханнине палăртас мар тесе Бобарыхин енелле çаврăнса:—Кустов мĕнле вилни çинчен тĕплĕн каласа парăр,—терĕ.

Калава каласа пĕтернĕ хыççăн Сергей пĕр вăхăт чĕнмесĕр тăчĕ, шухăша кайса ата пуçĕпе типĕ тăпрана хускатрĕ. Унтан:

— Каçхине пуçтарăнăпăр. Кустовпа пулса иртнине пăхса тухăпăр,—терĕ.

Сергей хăвăрт çаврăнса кайма тăначчĕ, анчах вăл инçере мар, автомобиль çитсе чарăннă çĕрте, техниксем пухăннине курчĕ... Кунта çитсен Сергей металл татăкĕсем алăран алла çÿренине асăрхарĕ, вĕри пулнăран вĕсем авкаланса пĕтнĕ, татăк-кĕсĕкленсе шĕвĕрĕлсе тăракан хĕррисем хăрăмпа витĕннĕ. Вăл татăксенчен чи пысăккине те ывăç тупанĕ пек çеç: вĕсене Кустов тата унăн трофейĕ ÿкнĕ çĕртен пуçтарса килнĕ. Техниксем хушшинче тавлашу пырать: металăн çак татăкĕсем кăмăн-ха—совет е тăшман самолечĕн.

Сергей татăксенчен пĕрне илчĕ те, нимскер чĕнмесĕр хăй вырнаçнă çĕре утрĕ. Штаб палаткине кĕрсен замполита дюраль татăкне тыттарса çапла каларĕ:

— Лайăх сыхласа усрăр, вăл Хĕрлĕ Çар музейĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнĕ.

Ник. ШПАНОВ.

Заключительный баланс

Марпосадской мастерской массового пошива одежды на 1 января 1941 года.

Наименование статей	Сумма	Наименование статей	Сумма
А К Т И В		**П А С С И В**	
А. Основные и отвлеченные средства		А. Уставной фонд	36866—66
Основные средства	6866—66	Прибыль текущего года от реализации	21750—80
Всего по группе А.	6866—66	Итого	58617—46
Б. Нормируем. средства (собств. и прокред)			
Материалы, сырье, топливо и проч.	48081—52	Соцстрах по отчислениям	398—98
Готовая продукция, товары и выполненные работы	6615—70	Рабочие и служащие	4051—51
		Итого	4450—49
Всего по группе Б	54727—22	Всего по группе А	63067—95
Г. Средства в расчетах и прочих активах		**Б. Средства капитального ремонта**	
Товары отгруж. и вып. работы	23674—52	Финансирование из райбюджета	13055—25
Денежные средства	25681—87	Специальные фонды	78—09
Итого	49356—39	Расчеты	36260—73
Расчеты	1511—75		
Всего по группе Г.	50 68—14	Всего по группе Г	49394—07
БАЛАНС	112462—02	БАЛАНС	112462—02

Счет потери и накопления

Убытки		Прибыли	
Сальдо прибылей	21750—80	От реализации	21750—80
		Всего	21750—80
БАЛАНС	21750—80	БАЛАНС	21750—80

Директор МУТРЕСКОВ. Гл. бухгалтер ЮШИН.

Настоящий баланс утвержден исполкомом Марпосадского Райсовета депутатов трудящихся 14 февраля 1941 года.

Зав. райфо АНКУДИНОВ Ст. инспектор госдоходов ТАРАСОВА.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» тата «Хатĕр пул» журналсен — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2501. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 293, Ф. 6. 58 84 п. л.